Пĕр №-рĕ 10 пус. *19-мĕш çул тухать.* **Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!**

1937 НОЙАБĔР 28 ВЫРСАРНИКУН 272 (4784)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 0—23

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Суйлав кампанийĕ нацилĕ республикăсемпе облăçсенче

Пирĕн социалисăмла аслă тăван çĕршывра пурăнакан пур нацисен ĕçсыннисем те пит пысăк çĕкленӳпе тата пит пысăк хавасăхпа декабĕрĕн 12-мĕшне хатĕрленеççĕ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче вĕсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйлаççĕ. Суйлавсем ССР Сойузĕнчи халăхсен тăванлă сойузĕпе никам пăсайми туслăхĕн чи çутă демонстрацийĕ пулса тăрĕç.

ССР Сойузĕн государствă влаçĕн аслă органĕ—Аслă Совет—чи демократиле майпа суйланакан икĕ палатăран тăрать, вĕсем—Сойуз Совечĕ тата Национальнăçсен Совечĕ. „ССР Сойузĕ вăл пурте пĕлеççĕ, нумай нацилĕ государствă. Пирĕн ССР Сойузĕнчи мĕн пур ĕçсыннисен, вĕсен национальнăçне-мĕнне пăхмасăр пĕтĕмĕшле интересĕсене пĕтĕçтерсе тăракан аслă орган пур. Вăл—Сойузăн Совечĕ. Анчах ССР Сойузĕнчи национальнăçсен пĕтĕмĕшлĕ интересĕсемсĕр пуçне, тата нациле уйрăмлăхсемпе çыхăнса тăракан хăйсен уйрăм, спецификăла интересĕсем пур. Çав спецификăла интересене хисепе хумасăр йурать-и? Çук, йурамаст. Кирлĕ-и, шăп çав спецификăла интерессене палăртса тăма йатарласа тунă аслă орган? Сăмах та çук, кирлĕ. Пĕр иккĕленӳ те пулма пултараймаст, ССР Сойузĕ пек нумай нацилĕ государствăна çавăн пек органсăр тытса пыма май пулман пулĕччĕ. Çавăн пек орган вăл—иккĕмĕш палатă, ССР Сойузĕн Национальнăçсен Совечĕ, пулса тăрать" (Сталин).

Национальнăçсен Советне кашни сойузлă республикăн ĕçсыннисем, унта пурăнакан халăхăн хисепне пăхмасăр, 25-шер депутат, кашни автономлă республикă—11-шер депутат, кашни автономлă облăç—5-шер депутат тата кашни нацилĕ округ—1 депутат суйласа йараççĕ. Çапла ĕнтĕ Совет Сойузĕнче пурăнакан халăхсем хăйсен спецификăла интересĕсене палăртса тăма представителсене чи туллин суйласа йараççĕ.

Сойуз Советне тата Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата пирĕн çĕршывăн мухтавлăхĕ пулса тăракан çынсене, советлă тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕсене палăртнă. Кандидатсен йачĕсене каласа тухнийĕх—ССР Сойузĕнчи пур халăхсем те улăпла çĕкленнине, вĕсен творчествăла вăйĕсем тĕлĕнмеле ӳсе чечекленсе кайнине, çынсем халиччен пулманлах ӳснине кăтартса тăрать. Ĕлĕк пусмăрта пулнă, халĕ тулли правалă нацисем уйăрнă çынсем кандидатсен хисепĕнче—Аслă совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсемпе чи лайăх хĕрĕсен хисепĕнче—нумайăн шутланаççĕ.

Кандидатшăн агитацилесси—суйлав кампанин хальхи вăхăтĕнче тĕп задачă пулса тăрать. Çак агитацийе чăн-чăннипех, большевикла сарса йарас пулать. Кандидата палăртнисен — çак партири тата партире тăман большевиксен капнин пурнăç çулĕ нумай нацилĕ аслă совет халăхĕн биографийĕнчи çутă страници пулса тăрать. Кашни кандидатăн ӳсĕмĕ—çак сталинла чи лайăх ученексен тата питомецсен ӳсĕмĕ—нумай пин тата нумай миллион çынсен ӳсĕмĕпе çĕкленӳнĕ тĕкĕрти пекех кăтартса тăрать. Суйлавçăсене вĕсен кандидачĕн пурнăçĕ тата ĕçĕсем çинчен простă та тĕрĕс каласа парасси —пархатарлă тата хисеплĕ задачă!

Хăшпĕр çĕрте пĕтĕм суйлав кампанин çак чи паха задачине пурнăçа кĕртме кирлĕ пек тытăнман-ха. Арменире парти организацисем агитациле-пропагандисла ĕçе тимлĕн, большевикла сарса йаман-ха Арменири компарти Тĕп Комитечĕ республикă столицинче те, Ереванра, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсемшĕн агитаци ĕçне туманнине асăрхамаст пулмала. Хамăрăн тăван çĕршывăн чи лайăх тата чи мухтавлă ывăлĕсем çинчен ĕçсыннисем хушшинче каласа памаççĕ.

Арменире суйлав кампанине çавăн пек йĕртсе пыни, ăна йĕртсе пыни теме йурать пулсан, чи сахалтан та, республикăри тӳрĕ коммунистсене тата партире тăман ĕçсыннисене пурне те тĕлĕнтерет.

Кăçалхи суйлав кампанийĕ — Совет влаçĕ çирĕм çул пурăннă хушăра пирĕн парти хăçан та пулин иртернĕ кампанисенчен чи пысăк массăлă-политикăла кампани. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенче çак кампанин чылай уйрăмлăхĕсем пур. Организацилле тата агитацилле-пропагандăла ĕçсене тунă чухне вырăнти конкретлă условисене пĕтĕмпех шута илсе пулать. Çулăмла большевикла агитаци—вăл содержанийĕпе тата чĕлхе тĕлĕшĕнчен халăхшăн ăнланмалла пулсан çеç пĕлтерĕшлĕ пулать. Кашни халăхăн пурнăçĕ, унăн ĕлĕкхи пурнăçĕ, вăл Совет влаçĕ чухне чечекленсе ӳсни чи ĕнентерӳлĕ те ĕçлĕ агитаци тума пуйан материал парать.

Нацилле республикăсемпе облăçсенче нумайĕшĕнче, сăмахран, Дагестанра, вуншар тĕрлĕрен нацисем пурăнаççĕ. Вĕсем кашни хăйсен чĕлхипе калаçаççĕ. Задачă çакă пулать—пур нацисен ĕçсыннисем те, пурте пĕр çын пекех, пулас суйлавсен пахалăхне лайăх ăнланса илччĕр, хăйсен кандидачĕсене пĕлсе тăччĕр, вĕсемшĕн пурте пĕр кар сасăлаччĕр.

Суйлав документĕсене, агитацилĕ тата пропагандăла литературăна ССР Сойузĕнчи пур халăхсен чĕлхипе те пичетлесе кăларасси уйрăмах ответлă задачă пулса тăрать. Тăшмансем çак ĕç патне аллисене тăсма хăтланни сайра мар пулать.

Суйлав кампанийĕн ăнăçлăхĕ суйлав участкисенче татăклă пулать. Анчах нациле республикăсемпе облăçсенчи парти организацийĕсем тата совет органĕсем нумайĕшĕ вĕсен чи пирвайхи тата чи таса обйазаннăçĕ ĕçсыннисене çĕр процентчĕпех суйлава хутшăнтарма условисем тăвасси пулса тăнине ăнланса илесшĕн мар пулас. Чылай вырăнсенче ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанни пуçпулса тăрать, суйлав кампанийĕ çине çав тери тимсĕр пăхни те тĕл пулкалать,—çавăнпа тăшмансем пит çăмăлăн уçă кураççĕ.

Суйлавçăсен спискисене час-часах каçарма çук тирпейсĕр тунă. Ташкентра, Ленински суйлав округĕнче суйлавçăсем пин çын ытла спискăсене кĕмесĕр йулнă. Йатсене, ашшĕ йачĕсене, хушаматсене тата хăш çулта çуралнине çырнă чухне пăсса пĕтернисем калама çук нумай.

Ишибей районĕнче (Башкири) спискăсене çав тери тирпейсĕр тунă, вĕсене кăларса çаксен пирвайхи кунсенчех спискăсене 950 суйлавçă кĕмесĕр йулнине палăртнă.

Минск хула суйлав округĕнчи суйлав комиççинче ĕçсыннисем хăйсене спискăна тĕрĕс кĕртмен пирки панă зайавленисем пин ытла пухăннă. Саккуна пăсни çинчен панă зайавленисене 5—8 кун хушши пăхмасăр выртараççĕ. Партин хула комитечĕн секретарĕ Матвейев йулташ тата хула совечĕн председателĕ Ванейев йулташ суйлавçăсем панă зайавленисене пăхса тухасси ытла та йапăх тăрать тесе пĕр сасăпах йышăнаççĕ. Анчах сăмахпа йышăннинчен ытла вĕсем нимĕн те тумаççĕ-ха.

Симферопольре спискăсене кĕртмесĕр хăварнă граждансем икĕ пине йахăн зайавлени панă.

Тăшманла элементсем кирек мĕнле хушăкран та хĕсĕнсе кĕме тăрăшаççĕ. Абакан (Хакасси) хули советĕнче тăрăшыв çине кăларнă халăх тăшманĕн— бурĵуалă националис Торосовăн пулăшаканĕ Аргудайев хуçаланса тăрать. Вăл йĕртсе пынипе тунă спискăсене вунтăватă пин суйлавçăран икĕ пин çын ытла кĕртмесĕр хăварнă. Спискăсене кĕртмосĕр пуринчен ытла вырăссене, уйрăмăн илсен чукунçул посолкинче пурăнакансене, шоферсене, милиционерсене т. ыт. те хăварнă. Партин облăç комитечĕн секретарĕсене иккĕшне те, çавăн пекех Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидата Инкижеков йулташа та спискă кĕртмен.

Тăшмансем тĕрлĕрен майсемпе сийенлĕ ĕç тăваççĕ, саккуна пит киревсĕр тӳррĕнех пăснисем те пит нумай. Суйлавçăсен спискисене, пурте пĕлеççĕ, ăсран тухнă çынсене „саккун кăтартнă йĕркепе—вĕсем ăсран тухнă тесе йышăннă çынсене, кĕртмеççĕ. Тутар республикĕнче вырăнти сывлăх халăх комиссариачĕ ăсран тухнисене пурне те („чаранманнисемсĕр пуçне") сывлăхĕсене пăхма районри пульницăсене чĕнмеле, тесе кăтарту панă, тата вĕсен сывлăхĕсене пăхса тухма календарлă план та хатĕрленĕ...

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи паллă кун çитесси çирĕм кунран та сахалтарах йулчĕ. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи парторганизацисен мухтавлă ĕçĕ—пур нацисен суйлавçисем те, ССР Сойузĕнчи пур халăхсен чĕлхисемпе калаçаканнисем те тата пирĕн аслă тăван çĕршывăн пур кĕтесĕсенче пурăнакансем те пурте пĕр çын пек пулса çĕршывăн чи лайăх çыннисемшĕн, вĕсен кандидатурисене Аслă Совета депутата суйлама тăратнă çынсемшĕн сасăлама кирлĕ условисене туса парасси пулса тăрать.

(„Правда" умстаттийи, 1937 çулхи нойабĕрĕн 26-мĕш).

А. Ф. Горкин йулташ Йаманкассинчи суйлавçăсем патĕнче

ЙАМАНКАССИ, нойабĕрĕн 25-мĕшĕ. Пайан, Национальнăçсен Советне депутата суйлама Канашри суйлав округĕ № 500 тăрăх регистрациленĕ кандидат ССР Сойузĕн Тепĕçтăвкомĕн секретарĕ А. Ф. Горкин йулташ Йаманкасси суйлав участкинчи суйлавçăсем патĕнче пулчĕ. Кунта ăна суйлавçăсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. А. Ф. Горкин йулташ Йаманкассинче колхоз хуçалăхĕпе паллашрĕ.

Кăнтăрла иртсен виçĕ сехетре, Доронин йачĕпе тăракан колхозăн йатарлăса илемлетнĕ аслă та çутă клубĕнче суйлавçăсен пухувĕ уçăлчĕ. А. Ф. Горкин йулташ ССР Сойузĕнчи Аслă Совета суйласси çинчен доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче тĕнчери чи демократиле Сталинла Конституци, ССР Сойузĕн хаватлăхĕпе тĕреклĕхĕ, ĕлекхи пурнăçăн латсăр сăн-сăпачĕ, капиталисăмла йĕритавралăх çинчен чаранса тăчĕ. Йулашкинчен вăл суйлавçăсене хăйĕн биографийĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ. А. Ф. Горкин йулташ докладне тимлĕн итлерĕç. Темиçе хутчен те тăваллăн ала çупса саламларĕç.

Округри суйлав комиççи председателĕ Бугров йулташ, суйлавçăсем ыйтнипе А. Ф. Горкин йулташ докладне чăвашла куçарса пачĕ. Доклад тăрăх пренире пуре 10 суйлавçă тухса каларĕç. Чималтанах колхозри паллă ударник Роман Петрович тухса каларĕ:

— Йулташсем,—тет вăл—пирĕн округри суйлавçăсем Аслă Совета суйлама Горкин, Чкалов, Цыганова йулташсене кандидата тăратрĕç. Епĕ вĕсене Йаманкассинчи суйлавçăсен йачĕпе хĕрӳлĕ салам калатăп (Ала çупаççĕ).

— Колхозла пурнăçра çеç,—тет вăл малалла,—епĕ çын пултăм. Халĕ пуйан та культурлă, çителĕклĕ пурнăçпа пурăнакан пултăм. Карта тулли выльăх-чĕрлĕх, кĕлет тулли тырпул пур, кил-çурта культурă хĕвеле кĕчĕ. Пирĕн йал ĕлĕк тĕттĕм йалччĕ. Халĕ çулленех ӳссе, çĕнелсе, культурланса пырать. Ĕлĕк пĕтĕм йалĕпех куççене трахом хупласа илнĕччĕ, халĕ ăна тĕпрен пĕтертĕмĕр. Йалта калама çук хаваслă пурнăç пулса тăчĕ. Акă мĕншĕн саванатăп епĕ. Акă мĕншĕн Сталина тав тăватăп.

Епĕр Аслă Совета суйлас тапхăрта тăратпăр. Пирĕн кандидатсем—Горкин, Чкалов, Цыганова йулташсем. Вĕсем хамăр халăх хушшинчен çуралса ӳснĕ, вĕсем халăхшăн тăрăшаççĕ. Акă, кунта Горкин йулташ хăй пурнăçĕ çинчен хăй каласа кăтартрĕ. Чкалов кăçал Çурçĕр урла Америкăна вĕçсе кайрĕ. Цыганова хамăр чăваш хĕрĕ, ĕлĕк хутла пĕлменскер, хăй тăрăшнипе хута вĕренсе, паллă çын, стахановкă пулса тăчĕ. Вăл Куславкка комбинатĕнчи чи лайăх стахановкă. Пурте вĕсем суйланма тивĕçлĕ. Çавăнпа епĕр, суйлавçăсем, хамăр сасăсене Горкин, Чкалов, Цыганова йулташсемшĕн паратпăр.

Сыва пултăр пире йĕртсе пыракан аслă учител Сталин йулташ! (Тăваллăн ала çупаççĕ).

Суйлавçăсен пухуве пĕр саслăн çакăн пек резолюци йышăнса хавар ĕ: „Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пурте суйлава тухса, хамăр сасасене Горкин, Чкалов, Цыганова йулташсемшĕн паратпăр. Вĕсем— Аслă Совета суйланма тивĕçлĕ кандидатсем, пире татах та хаваслă пурнăç туса пама тăрăшакан тăван çĕршывăн чи лайăх çыннисем".

Пуху пĕтсен, Горкин йулташ суйлавçăсемпе ăшшăн сывпуллашса, Сиккасине кайрĕ.

Суйлав округĕсем тăрăх

— Димитров йулташ Кострома суйлав округĕнче баллотировкăра тăма килĕшӳ пани Кострома ĕç çыннисем хушшинче калама çук пысăк çĕкленӳ тунă. „Епĕр хамăр сасăсене Сталин йулташăн тӳре соратникĕшĕн, Коминтерн Ĕçтăвкомĕн генеральнай секретарĕшĕн—Георги Михайлович Димитровшăн паратпăр", теççĕ суйлавçăсем Кострома округĕнче халĕ пыракан нумай çынлă пухусенче.

— Ленинградри Педроградски суйлав округĕнчи килхуçи хĕрарăмесем суйлавçăсем патне çыру йанă. Вăл çырура çапла çырнă: „Пире пысăк чыс тиврĕ. Пултарулă социалисăмла çĕршывăн дипломачĕ— Максим Максимович Литвинов пирĕн суйлав округĕнче баллотировкăра тăма килĕшрĕ. Кăна епĕр чăтаймасăр кĕтнĕ. Халĕ ĕнте епĕр хамăр сасăсене аслă Сталинăн тӳре вĕренекенĕшĕн, лăпкă саманашăн кĕрешекен борецшăн— Литвинов йулташшăн пама пултаратпăр, çавăнпа епĕр пĕтĕм чĕререн саванатпăр".

— Каменкăри (Тамбов облăçĕ) суйлав умĕнхи митингра ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидат Совет Сойузĕн Геройĕ Волкан Семенович Горанов сăмах тухса калаъă. Горанов йулташа суйлавçăсем—район центрĕнче пурнакансем, колхозниксем хавасăн кĕтсе илнĕ.

— Тайгари Комсомольск хулинче (Инçет-хĕвелтухăç крайĕ) суйлавçăсем Сойуз Советне депутата суйламали хăйсен кандидачĕпе—комсомолкă орденоносец Валентина Хетагуровăпа тĕл пулнă. „Епĕ комсомольск ĕçсыннисене Аслă Совета депутата суйлама манăн кандидатурăна палăртса мана шаннăшăн,— тенĕ пухура Хетагурова йулташ,— чĕререн тав тăватăп. Мана пысăккăн шаннине ĕçпе тавăрма епĕ хаман пĕтĕм вăйа, пĕтĕм пултарулăха паратăп".

— Тавтиман йалсоветĕнчи (Уфа йал суйлав округĕ) 400 ытла суйлавçă колхозниксем пухува пынă. Вĕсем вăл пухура ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали хăйсен кандидачĕпе, „Кзыл йул" йалхуçалăх ертелĕнчи бригадирорденоносец Миниахмет Вакилевич Вакилевпа тĕл пулнă. „Вакилев йулташ—Чишмин районĕн мухтавлăхĕ,—тенĕ пухура сăмах тухса калакан Тавтиман МТС директорĕн заместителĕ Николайев йулташ.— Ăна большевикла çĕнтерӳсемшĕн кĕрешме пултарнишĕн пурте хисеплеççĕ. Вăл пирĕн кандидат пулса, суйлавçăсем шаннине ĕçре катартса тавăрĕ".

(ТАСС).



Хĕрлĕ йалавлă Балти флочĕн командуйушчийĕ иккĕмĕш ранг флагманĕ Иван Степанович Исаков—Ленинград хулинчи Приморски суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрать (сулахайра).

Сталинград облăçĕн Ĕçтăвакан комитет председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Содмон Семенович Семенов—Михайловски суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрать (сылтăмра). (Сталинград облăçĕ).

(Сойузфото).

Кувакино районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

КУВАКИНО (хамăр кор.). Нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче районри рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служащисен, колхозниксен коллективĕсем тата обществăла организацисем суйласа йанă представителсен суйлав умĕнхи канашлувĕ пулса иртрĕ. Канашлура Сойуз Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Лука Семенович Спасов йулташ тата Национальнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Тамара Алексейевна Моисейева йулташсем пулчĕç.

Канашлăва „Ударник" колхоз председателĕ Радашчев йулташ уçрĕ. Хăйĕн хĕрӳле сăмахне Радашчев йулташ тулли правалă пурнăç паракан аслă Сталин йатне асăннипе пуçлать. Залăра тăваллăн ала çупни йанăраса кайать.

— Йулташсем, пирĕн Улатăр суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкăра тăма Ленинпа Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлекен большевик—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. Спасов йулташ килĕшрĕ. Пирĕн Улатăр суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйланма баллотировкăра тăма Улатăрти паровозсем йусакан заводри паллă стахановкă Т. А. Моисейева йулташ килĕшрĕ. Горький суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйланма баллотировкăра тăма паттăр та хăйулă лĕтчик—В. П. Чкалов йулташ килĕшрĕ.

Аслă Совета депутата суйламали кандидатсен йачĕсене асăннине суйлавçăсем хыттăн ала çупса саламлаççĕ.

— Епĕр пайан телейлĕ çĕршывăн паттăр ывăлĕсемшĕн Чкаловшăн, Спасовшăн, Моисейевашăн сасăлама тивĕç пулнишĕн саванатпăр. Епĕр колхозниксем хамăр сасăсене Чкалов, Спасов, Моисейева йулташсемшĕн паратпăр.

Пирвайхи „Красный партизан" колхоз председателĕ Атнашкин йулташ сăмах илет:

— Нумай пулмасть епĕр Октйабĕр революцин 20 çул тултарнине уйавласа хамăрăн 20 çул хушшинчи пысăк ӳсĕмсен итогне турамăр. Халĕ пĕтĕм çĕршыв пĕр камăлпа, пĕр шухăшпа, пĕр хаваслăхпа Аслă Совета суйлама хатĕрленет. Шутлăр ха хăвăрах. Патша саманин вăхăтĕнче пулсан епĕр хресченсем саванăçлă пурнăçпа пурăнма пултарнă-и? Ĕметленме те пултарайман. Епĕ хамăр йалах илетĕп. Ĕлĕк пирĕн йал хăрăк-харăк йал пулнă. Халĕ пирĕн пысăк колхоз. Вăл çулран çул ӳссе пуйанланса пырать. 1934 çулта колхозăн балансĕ 74 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1937 çулта 360 пин тенкĕ пулчĕ. 1934 çулта гектартан 7 центнер тырă илнĕ пулсан, 1937 çулта 15 центнер илтĕмĕр.

Епĕр колхозниксем Аслă Совета суйлама пирĕн округсем тăрăх палăртнă кандидатсемшĕн—Спасовшăн, Чкаловшăн, Моисейевашăн сасăлатпăр. Колхозниксем мана çапла калама хушса йачĕç: Епĕр, колхозниксем, хамăр кандидатсемшĕн сасăласа хамăрăн телейлĕ пурнăçшăн, Сталин йулташшăн сасăлатпăр. Сыва пултăр Сталин йулташ. (Ала çупаççĕ).

Трибунă çине начар пурăнакан йединоличник пулнă халĕ колхозри паллă стахановец, пуйан колхозник Симинов йулташ тухать. Унăн пирвайхи сăмахĕ—тулли пурнăç туса панишĕн Сталин йулташа тав туни тăваллăн ала çупнипе, Сталин йулташа саламласа „урра" кăшкăрнипе витĕнет.

— Епĕр,—тет Симинов йулташ,— Спасов, Моисейева, Чкалов йулташсемшĕн сасăлатпăр. Мен пек тесен вĕсем большевиксен партине чĕререн парăнса ĕçлеççĕ.

Канашлура тухса калакансем: учительница Белова, колхозник Мингалов тата ыттисем те пурте хăйсене канашлăва суйласа йанă коллективри суйлавçăсем тăратнă кандидатсемшĕн Чкаловшăн, Спасовшăн, Моисейевашăн сасăлама пулни çинчен пĕлтерчĕç.

Канашлура Сойуз Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Спасов йулташ тата Национальнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Моисейева йулташ тухса каларĕç. Вĕсем суйлавçăсене хăйсен пурнăçĕсем, ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç. Хăйсем çине пысăк шанчăк хунишĕн чĕререн тав туса вăл шанчăка тивĕçре тытма пулчĕç.

Канашлу. Сталин йулташ патне саламла çыру йама йышăнчĕ. Çавăнпа пĕрлĕх районри суйлавçăсем патне чĕнсе калани кăларчĕ.

Канашлу пынă вăхăтрах клуб алăкĕ умне Кувакино, Чикс тата Злобина йалĕсенчи ĕçсыннисен, вĕренекенсен хĕрлĕ йалавсемпе кăвăрланнă колоннисем пухăнма пуçларĕç. Канашлу хупăннă хыççăнах клуб умĕнче нумай çынлă митинг пулса иртрĕ.

Суту-илӳ организацисем декабĕрĕн 12-мĕшне хатĕрленни

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун пĕтĕм магазинсем, ларйоксем, столовайсем, кафесем тата ресторансем йаланхи расписанипех ĕçлеççĕ. Пур суту-илӳ предприйатисен, çавнашкалах пĕрле апатланмали предприйатисен работникĕсем сасăлас ĕçре хутшăнма пултарччăр тесе, ССР Сойузĕнчи шалти суту-илӳ Халăх Комиссарĕ Смирнов йулташ сутуилӳ ĕçенче ĕçлекенсен декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ĕçе тухмали графикне, суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекен кашни хăйĕн суйлав участкине кайма пултармалла тума хушнă.

Смирнов йулташ кăтартăвĕ тăрăх шалти суту-илӳн вырăнти органĕсен магазинсене тата ларйоксене декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пĕр татти-сыпписĕр ĕçлеме тĕплĕ хатĕрлемеле. Магазинсене çулĕ пахалăхла таварсем çителĕклĕ кӳрсе пымала. Канса çӳрене çĕрте, демонстрацисенче йе пухусенче сутма Халăх Комиссарĕ çĕклесе çӳремели суту-илӳ организацилĕме хушнă.

Суйлав комиççисемпе килĕшнĕ тăрăх, шалти суту-илӳ вырăнти органĕсем округри тата участкăри комиççисен çурчĕсенче буфетсем уçмала. Вăл буфетсенче нумай çимĕç таварĕсем, путербродсем, печĕк кукăльсем, пирожнайсем тата конфет-подушкăсем пулмала.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Смирнов йулташ хушăвĕпе пĕтĕм магазинсенче, ларйоксенче, палаткăсенче, çавнашкалах пĕрле апатланмали предприйатисенче ĕрехсем сутма чарнă. (ТАСС).

Телеграммă

Чăваш АСС Республикинчи райĕçтăвком председателĕсене

Колхоз правленисем тата вĕсен председателĕсем хăйсен обйазаннăçсем çине çийелтен пăхса ĕçленине пула хăшпĕр колхозсенче колхоз членĕсен аллинче колхоз кĕнеки йе вуççех çук йе пулсан та кирлĕ пек йĕркелемен: пичет лартман, колхоз председателĕ ала пусман тата ыт. те. Колхоз кĕнекисем тĕлĕшпе ĕç çавăн пек йĕркесĕр тăнине хăш-пĕр колхоз председателĕсем колхозникăн ĕçкунĕ çук йе хăшпĕр колхозниксем ĕçлейми пулнă пирки пулать тесе тĕрĕсе каларма пăхаççĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ суйлав кунĕ çитиччен кашни колхозникăн колхоз кĕнекине йĕркелесе çитерме хушать.

Кашни колхоз членĕ вальли колхоз кĕнекисене йĕркелесе панине райĕçтăвкомсен тĕрĕслесе тухмала, йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсни палăрсан, вĕсене çийĕнчех тӳрлетмеле.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ

З. АНДРЕЙЕВА.

Шупашкар хули
1937 ç. нойабĕрĕн 27-мĕшĕ.

ССР СОЙУЗĔН АСЛĂ СОВЕТНЕ СУЙЛАС УМĔН

Пирĕн кандидатсем—çĕршывăн чи шанчăкла ывăл-хĕрĕсем

Йĕпреç районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Совечĕ депутатне суйлама регистрациленĕ кандидат орденоносец С. К. Коротков йулташа, тырпулă маçтăрне Йĕпреç районĕнчи суйлавçăсем çав тери ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Пурте уппа каласан, унăн ĕçĕсем çинчен ыйтса пĕлме тăрăшаççĕ.

Суйлав умĕнхи канашлăва 500 çын ытла пухăнчĕç. Канашлура чи малтан Коротков йулташ хĕрÿлĕ сăмах каларĕ. Ун хыççăн суйлавçăсем Совет Союзĕн Аслă Совечĕне депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен тухса каларĕç. Вĕсен виçĕ кандидатшăн çав сасăламала: Чкаловшăн, Спасовшăн, тата Коротковшăн.

Тухса калакансем пурте çав асăннă кандидатсемшĕн сасăлама ыйтаççĕ.

„Çисĕм" колхоз бригадирĕ Коротков йулташăн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Доверенная К. Клементйев йулташ хăйĕн сăмахне ĕлĕкхи пурнăç çинчен каланипе пуçларĕ.

— Ĕлĕк виçĕ пусу, сухапуçĕ, йăрансем çĕре валса тăна. Йапанши çапăçнă Ĕмĕр выçăн-тутăн пушалана пурăнна епер, чухансем. Халĕ ĕнтĕ колхозра пăран та, сухапуç те, чуханлăх та тĕп пулна. Колхозра епер çакăр-тавар-ла пултамар. Савăнăçлă пурнăç мĕн иккĕнне туйса илемĕр. Пурте те хамăр тăвăнпăр, пурнăç лайăхлансах пырасси йалт хамăртан килет. Ав, Коротков йулташ хăйĕн колхозне мĕнле туса хучĕ. Вăл—пирĕн тавралăх илемĕ. Республикăри пур колхозсене те Кольцовка колхозĕ пек тăвасчĕ.

Епер, „Правда" колхоз членĕсем, Чкаловшăн, Спасовшăн тата Коротковшăн сасăлама пултăмăр, терĕ Клементйев йулташ.

С. Ф. Ашанин йулташ хăйĕн сăмахĕнче Коротковсен çемйи тата Кольцовка чухăн хресченĕсем ĕлĕк мĕнле пурăнни çинчен примерсем илсе каласа пачĕ.

— Ĕлĕк Кольцовка ĕçхресченĕсем колхоз тăвиччен питĕ начар пурăначчĕç. Кам пасарта çавăх илет? Кольцовка хресченĕ. Кам улăм илет? Кольцовка хресченĕ. Пурнăç йăвăр пирки Ксенофонтий Коротков çамрăклах вилчĕ. Амăшĕ суккăр пулса ларчĕ. Тăлăха йулнă тăватă ача мĕнле пурăнни калама çăмăл мар. Сергей Ксенофонтович Коротков, Совет условинче ÿссе çитĕннĕ çамрăк, хăйĕн çемйине кăна мар, пĕтĕм Кольцовка йалне нушалă пурнăçран, выçлăхран хăтарчĕ. Пирĕн государствăн аслă органне çавăн пек çынсене суйламала та,—вĕçлет хăйĕн сăмахне Ашанин йулташ.

Канашлура тухса каланă ытти йулташсем те Чкалов, Спасов тата Коротков йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлама пулса каларĕç. Кандидатсен биографийĕсене каласа пачĕç. Пурин те пĕр шухăш: Чкалов, Спасов, Коротков йулташсем—пирĕн çĕршыв шанчăклă ывăлĕсем, коммунисла партийĕн, ĕçхалăхешĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекене кăтартнă çынсем. Епер вĕсемшĕн сасăлатпăр.

Канашлу, çав асăннă кандидатсемшĕн сасăлама ыйтса, Йĕпреç суйлав округĕнчи суйлавçăсем патне чĕнÿ йышăнса, „Интернационал" йурланипе хупанчĕ.

Вăл—пултарулă организатор

(„Çисĕм" колхоз бригадирĕ П. Николайев йулташ калана сăмах)

Йулташсем, епĕр суйлама палăртнă кандидатсем пурте—коммунисла партишен, ĕçхалăхешĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекене кăтартнă çынсем. Вĕсем пурте—çĕршывăн мухтавлă ывăлĕсем.

Ака Валерий Павлович Чкалова илер. Вăл, пурте пĕлетпĕр, Çурçĕр полюсĕн тĕлĕнчен çанталăкне çĕнтерсе, Совет Союзĕнчен Америкăна тÿрĕ каймали çула уçса, пĕтĕм тĕнчере чапа тухнă паттăр лĕтчик.

Иккĕмĕш кандидат—Луза Семенович Спасов йулташ та социализмшăн пыракан хаяр çапăçура ĕçхалăхешĕн, савăнăçла пурнăçшăн тăма пултарнине кăтарнă. Вăл ... Халĕ вăл ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулса ĕçлет.

Епер суйламали виççĕмĕш кандидат—тырпул маçтăрĕ, орденоносец Сергей Ксенофонтович Коротков. Коротков йулташа епер пурте лайăх пĕлетпĕр, вăл—хамăр патăрти çын.

Çамрăклах тăлăха тăрса йулса, нушăла пурнăçа тÿсмелле пулнă унăн. Çамрăк Сергей Коротков 1929 çулта Кольцовка йалĕнче колхоз организацилерĕ. Кольцовкари колхоза кĕске вăхăтрах пĕтĕм Совет Союзĕпе паллă колхоз туса хучĕ. Колхозниксене пуйан та культурлă пурнăç туса пачĕ. Вĕсен колхозĕнче ĕлĕк 50—60 пăтран ытла тыра туса курман çынсем халĕ 500—600-шер пăт тĕшĕ пăтне илеççĕ. Вĕсен—клуб, шкул, радиоузел, киноустановка пур, хаçат кăларма хăйсен типографи пур. Кăçал больница туса пĕтереççĕ. Ку çитĕнÿсем пурне те савăнтараççĕ. Кольцовка колхозĕ Чăваш республикинчи пур колхозниксене те пример пулса тăрат. Унăн руководителĕ Коротков йулташ—паттăр коммунист, пултарулă организатор. Пире пĕрле пыракан органсене çавăн пек çынсем кирле.

Çавăнпа та епĕр, „Çисĕм" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Коротков йулташа Национальнăçсен Совечĕн депутачĕ пулма палăртрамăр. Вăл ку чыса тивеçле. Епер Йĕпреç округĕнчи суйлавçăсене пурне те Коротков йулташшăн сасăлама чĕнетпĕр.

С. К. Коротков йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Совет Союзĕн Аслă Совечĕне суйлас кун—декабрĕн 12-мĕшĕ çывхарса килет, вăхăт нумай йулмарĕ. Ку кунă Аслă Совет çĕршывĕнчи пуйан та культурлă пурнăçпа савăнса пурăнакан халăхсем, халиччен етемлĕх историнче пулман пысăк уйав кунĕ вырăнне хурса, пысăкран та пысăк çĕнтерÿсем туса кĕтсе илеççĕ. Ку кун историпе пĕрремĕш хут рабочисемпе хресченсем, Совет Союзĕн Аслă Совечĕн депутачĕсене пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

Пирĕн Сталинла Конституци—чи демократилле Конституци. ССР Союзĕн Конституцийĕн 135 статйи тăрăх, 18 çулта кĕнĕ пур гражданăн те суйлама хутшăнма, суйланма пултараççĕ. Суйлавсенче пур граждансем те пĕртан правапа усă кураççĕ. Кашни совет гражданĕн вĕренме, канма, савăнăçлă пурăнма права пур. Епĕр коммунисла партийĕ йертсе пынипе социализм турăмăр.

Пĕр 20 çул каялла çеç, çын çыншăн кашкăр пулнă, пĕр 20 çул каялла çеç чăваш халăхне выçăх вырăнне шутлатчĕ. Совет влаçĕ пулсан, чăваш халăхĕ автономилĕ, промышленнăçлă, хресченсене пуйан пурнăç паракан колхозлă, социалисăм строительствинче тунă пысăк çĕнтерÿсемпе ÿсĕмшĕн Ленин орденне илме тивĕçлĕ çĕршыв пулчĕ. Чăваш ĕçхалăхĕ Совет союзĕнчи ытти халăхсем пекех, тулăх, савăнăçлă пурнăçпа пурăнма пуçларĕ.

Аса илĕр-ха хăварăн иртнĕ, ылханлă пурнăçа, таплаштарса пăхăр-ха ăна паянхи хĕвел пек çутă пурнăçпа! Вара халĕ хăвăр тăвакан çитĕнÿсем тата та пысăкраххăн курăнĕç.

Ĕлĕк вĕренÿ прави çинчен шухăшламали те пулман. Акă пирĕн йалта, Кольцовкăра, пĕр пĕчĕк шкулта 16 çын вĕреннĕ, халĕ ĕнтĕ колхоз 400 çын вĕренмелĕх тунă вăтам шкулта хамăр йалтанах 200 ача вĕренеççĕ. Пирĕн Сталин йулташ йачĕпе тăракан колхозăн мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Тырпулă нумай, кăçал колхозниксем ĕçкунĕ пуçне пĕр пăта йахăн тĕштырă илеççĕ. Колхозăн ĕне, сурăх, сысна фермисем пур. Пысăк клуб, радиоузел пур. Кашни колхозникĕн килĕнчех радио йанăрат. Калаçакан кино-установкă та хамăрăн. Колхозниксем, хăçан курас килет, çавăн чухне кинокартинăсем курма пултараççĕ. Ĕлĕк вĕсене тĕлĕкре те курман вĕт!

Палсенчи çакăн пек пысăк çитĕнÿсем рабочисемпе хресченсем пуç пулса тăракан çĕршывра çеç пулма пултараççĕ. Уншăн пирĕн Ленин—Сталин партине, пĕтĕм халăхсен тусне, йуратнă çулпуçа —Сталин йулташа тав тумала. (Хыттăн алă çупаççĕ).

Ленин—Сталин партийĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе, пирĕн çĕршыв вăйлă индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Вăйлă промышленнăç çĕршыв сыхлăхне çирĕплетме, йалхуçалăхне машинлатма пулăшрĕ: Унччен, нумай пулмаст, хресченсем çĕре кукăр-макăр сухапуçĕпе тăрмаланă пулсан, тыррине алăпа акнă пулсан, çурлапа çеç вырнă пулсан, тăпачпа кăна çапнă пулсан, тырă тухăçне гектартан 40—50 пăт çеç илнĕ пулсан, халĕ пур ĕçе те машинпа тăватпăр: тракторпа сухалатпăр, сейалкăпа акатпăр, жнейкăпа, комбайнпа выратпăр, молотилкăсемпе çапатпăр. Гектартан 100 пăт ытла тĕштырă илетпĕр. Ĕç тухăçлăрах, тырпилĕ тухăçĕрех пулма пуçларĕ. Ĕç халĕ пурнăçра кирлĕ, савăнăçлă йапала пулса тăчĕ.

Фашисăм пирĕн тăван çĕршыва хирĕç, хăйĕн примерĕпе капиталисăм çĕршывĕсене пайан кун та пусмăрта асапланса пурăнакан ĕççынисене пĕрĕхтĕшĕн, пулас çутă пурнăçшăн кĕрешме хавхалантарса тăракан çĕршыва хирĕç пырака хăйсен вăрçа хатĕрленет. Фашиссем тĕрлĕ сăтăрла ĕçсем тума шăхтăсене сиктерсе йама, фабрик-заводсене сĕмĕрме, колхозсен выльăх-чĕрлĕхĕсене вĕлерме, чукунçулсем çинче крушенисем тума тата ытти тĕрлĕ етемле мар ирсĕр ĕçсене тума пирĕн çĕршыва шпионсем, диверсантсем йараççĕ. Вĕсене халăх тăшманĕсем, пирĕн телейĕн, савăнăçăн тăшманĕсем — троцкистсем, бухаринçăсем, рыковçăсем тата буржуалă националистсем пулăшса пынă. Вĕсем Чăваш республикинче те пайтах сăтăрланă. Çав ирсĕрсем пирĕн çĕршыва капиталистсемпе помещиксене тепĕр хут таварма, пирĕнтен хальхи телейлĕ пурнăçа, савăнăçа тытса илме кавапланнă. Тĕрлĕ сăтăрла ĕçсем туса, пирĕн çĕршывăн вăйне чакарма тăрăшнă. Пĕр сăмахпа каласан, çын мар, фашиссен йытти пулса, пур майпа та вĕсене пулăшнă.

Пирĕн вĕсене пĕр хĕрхенмесĕр, революциле хайарлăхпа çапса сĕмĕрсе, пĕр тымарĕ йулмиччен тăпăлтарса пăрахмала. Таса совет çĕршывĕнче нийепле тасамарлăх та ан пултăр! (Хыттăн алă çупаççĕ).

Октабĕр революцийĕпе çĕкленсе паттăрланнă, Ленин—Сталин партийĕ, аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, коммунисăм патне çирĕппĕн утакан халăхсем çул çинчи пур чăрмава та сирсе пăрахма пултараççĕ. Тĕнчере пирĕн çĕршывĕн ÿсĕмне, ăна коммунисăм патне кайма чарса лартма пултаракан вăй çук, мĕшĕн тесен, тĕнчере чи вăйли вăл — аслă Совет Союзĕ. (Алă çупаççĕ).

Советсен çĕршывĕнче халăхсем государствă ĕçне туса пыма хăйсен чи шанчăклă, чи пултарулă тата çĕршыва çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем патне хăйулăн йертсе пыракан большевиксен партийĕн ĕçне, коммунисăм ĕçне чĕререн парăннă çынсене çеç суйлаççĕ.

Йĕпреç суйлав округĕнчи ĕççыннисене пурне те, пирĕн çĕршывăн аслă органĕн —Аслă Совечĕн Национальнăçсен Советне депутата суйлама мана кандидата палăртса, ман çине пысăк шанăç хунăшăн пĕтĕм чунтан тавтăватăп. (Алă çупаççĕ).

Епĕ йаланах тÿрĕ кăмăллă коммунис пулса, хама хушнă ĕççене сталинла тапхăрти çынна тивĕçлĕ пек тума тăрăшнă. Малашне те Ленин—Сталин партийĕн çулйĕрĕшĕн, ĕçхалăхĕн интересĕсемшĕн çирĕппĕн тăрса, пирĕн çĕршыва малала кайма, ÿсĕмсемпе çитĕнÿсем тума чăрмантаракан тăшмансемпе пĕр хĕрхенÿсĕр, мĕн пур большевикла хайарлăхпа кĕрешме, хамăн пĕтĕм пĕлĕве, пĕтĕм вăйа коммунисăм тунă çĕре пама сирĕн умра тупа тăватăп. Сывă пултăр пире пăхса ÿстерсе, телейлĕ пурнăç паракан çулпуç Сталин йулташ! (Хыттăн алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

Лайăх хатĕрленсе пырат

ЙЕЛЧĔК. Патрекел йалсоветĕ суйлав участкине кĕрекен пур суйлавçăсене те Сталинла Конституципе çĕнĕ суйлав саккунне тĕплĕн вĕрентсе çитерес майпа 24 кружок организациленĕ. Вăл кружоксенче 700 ытла суйлавçă вĕренет. Çак кружоксенче кашни каçах занятисем иртсе пыраççĕ. Суйлавçăсен хушшинче кружока çÿреймен вата, суккăр, тата çамрăк ачалă хĕрарăмсем пур. Çавăнпа вĕсене агитаторсем суйлав саккунĕ çинчен килĕсене кайса вĕрентеççĕ.

Патрекел суйлав участкинче пурĕ 748 суйлавçă шутланат. Суйлавçăсен спискине нойабĕрĕн 12-мĕшĕнчех кантăклă витринă ăшне курăнмала çĕре çакнă. Халĕ суйлавçăсем хăйсен хушамачĕсене, йачесене, ашшĕ йачĕсене, миçемĕш çулта çуралнисене тĕрĕссипе тĕрĕс мар çырса хунине тĕреслеççĕ.

Суйлавçăсем пухăнмали çуртсене илемлетме тынăнчĕç. Кашни çуртах Ленин—Сталин сăнĕсене çакрĕç. Хĕрлĕ материалсем çине лозунгсем çырнă. Суйлавçăсене бÿллетен илсе кĕрсе тултарма вульв çуртĕнче 10 пÿлĕм туса хатĕрленĕ.

Суйлавçăсем суйлав çуртне пухăнсан, вĕсен вăхăтне культурлă ирттерме, канма, биллиард, шашка-шахмăт, домино илнĕ тата буфет организацилеççĕ, çавăнтах хаçат журналсем вуламали вырăн та пулат.

Декабĕрĕн 12-мĕш кунĕнче суккăр, вата, уксах тата çамрăк ачалă хĕрарăмсене суйлав участки çуртне сасалама лашапа илсе пыма Патрекелĕнче 16 çынна, Акчелĕнче 8 çынна уйăрса, вăл çынсем çумне колхозран лашасем çирĕплетнĕ.

Çавăн пекех тата „Осоавиахим" колхоз çумĕнчи драмкружок суйлав кунĕ тĕлнеле спектакль лартса пама тата тĕрлĕрен йурăсем йурласа пама хатĕрленет.

Гер. Иванов.

Хут пĕлменнисем—пĕлекен пулаççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ. Хут пĕлмен çынсем хут вĕренсе суйлавра хăйсем тĕлĕнех сасăлама хатĕрленеççĕ. Çĕнĕ Сала йалсоветĕнче нумай пулмаст çитĕннисен шкулĕнчен 7 çын вĕрентсе кăларчĕç. Макаç йалсоветĕнче Михайлов учител хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене 27 çынна вĕрентет. Вĕсене ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кунччен пурне те вĕрентсе кăлараççĕ.

Çав вăхăтрах районри хăшпĕр йалсовечĕсем çитĕннисене вĕрентес ĕçе хакламаççĕ.

Карапаш йалсоветĕнче хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем—66 çын, Утаçкасси йалсоветĕнче—43 çын. Анчах вĕсене халĕ те вĕрентме тытăнман.

Райçутĕçпайĕнче çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен Шляпин инструктор çак асăннă йалсоветсене пырса та курман. Вăл çитĕннисен шкулĕсене тивĕçлипе йĕркелес вырăнне:

— Епĕ ку ĕç пирки асăрхаттарса отношенисем йанă, манăн ĕç те пĕтнĕ, ытти ĕççене йалсовечĕсем тумала, — тесе ларат.

В. В

ССР Сойузĕн Совхозсен Халăх Комиссарĕ Тихон Александрович Йуркин— РСФС Республикинчен Орджоникидзе, суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрат.

(Сойузфото).

1.100 кубла метр йăвăç хатĕрлеме пулатăп

Редакци Йĕпреç вăрманпромхозĕн Кармали вăрманпунктинчи йăвăç касакан кадрлă рабочи Н. К. Воронов йулташран çакăн пек çыру илчĕ:

„Епĕ кăçалхи октабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшне çитиччен 1.100 кубла метр йăвăç касса хатĕрлеме обязательствă илтĕм. Епĕ лучковăй пăчкăпа ĕçлетĕп. Халĕ, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ йатпа социалисăмла ăмăртува хутшăнса, пайантан пуçласа декабĕрĕн 12-мĕшчен 200 кубла метр тивеçлĕ асортиментла йăвăç хатĕрлеме пулатăп, çав вăхăтрах йăвăç хуппине шурататăп, ĕçленĕ вырăна тасататăп, тураттисене çунтарса яратăп. Вăрманпромхозри кадрлă рабочисене тата сезонниксене пурне те манран пример илме чĕнетĕп.

Йăвăç касакан тысачник Н. Воронов."

Пирĕн кандидатсем

Зойа Ананийевна Андрейева

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕн кабинечĕ. Председател сĕтелли умĕнче шурă шăтăкла çухаллă тĕксĕм кăвакрах платйа тăхăннă хĕрарăм ларат. Çирĕп кĕлеткеллĕскер, камăллă уçă сăнпитлĕскер вăл, хăй умĕнчи кирле хутсене илсе вулат, паллă тăват. Хăй кабинетне кирле çынсене чĕнет. Умлă-хыçлăх тĕрлерен çынсем тĕрлерен ыйтусемпе кĕре-кĕре тухаççĕ ун патне. Телефон пĕр вĕççерен шанкăртатат. Халь Сентервăрринчен чĕнеççĕ, халь Ишлейпе калаçмала. Çĕршер ыйту таратаççĕ ун умне, çĕршер ыйту çине ответ парат вăл кунне, ĕççене татат, тĕреслет, хуплат, сенÿ парат. Ун умĕнче пĕтĕм республикăн тулли пурнăçĕ, пултарулă ĕççĕ, куллен-хи ыйтăвĕсем, çитĕнĕвĕсем, çитменлĕхĕсем. Вăл, аслă Октябĕр революцийĕ ирĕке кăларнă чăваш хĕрарăмĕ, аслă Ленинпа Сталин партийĕ пăхса ÿстернĕ совет хĕрарăмĕ — большевик, Чăвашсен Автономлă Социалисăмла Республика Тĕпĕçтавкомĕн председателĕ. Чăваш халăхĕ, коммунисcен партийĕ ăна пĕтĕм республика ĕçне шанса панă.

Хăш ĕмĕрте, хăш çĕршывра пулнă-ши тата хĕрарăма çапла шанни, хисеплени, çул пани, çапла пысăк ĕçе лартни? Хăçан ĕмĕтленме пултарнă-ши ĕлĕк чăваш хĕрарăмĕ хăй çапла пысăк тивĕç илсе арçынпа тан пулса государствă ĕçне хутшăнма пултарасси çинчен?

Хĕрарăм пурнăçĕ, хĕрарăм телейĕ! Питех те мĕскĕн, питех те йăвăр пулнăçке вăл ĕмĕртен! Помещиксемпе капиталисен ылханлă стройĕ, чухăнлăх, тĕттĕмлĕх, ултавлă тĕн, арçын мăшкăлĕ, патакки хĕрарăма тивĕçлĕ пурнăç кăтартман. Ăна çĕклеиме, çĕр çинче пуриншĕн те пĕр тан çутатакан хĕвел çине куç уçса савăнăçлăн пăхма паман. Ăна таптанă, пусмăрланă, сăнчăрланă. Унăн пурнăçне вĕççĕр асаплă, хĕнхурлă, куççуллĕ туса хунă. Унăн ача амăшĕ пулас телейне асап тунă. Ĕмĕт-шухăшне çул пулман. Вăл, мĕскĕн, хăй хĕр пулса çут тĕнчене çуралнă кунне ылханнă. Етемле пурăнас пурнăçĕ, кунçулĕ, вăйхалĕ уççăр сайа кайнишĕн кульанса куççул йухтарнă.

Атте хĕрĕ пуличчен
Хăрăк турат пулас мĕн,
Кĕрхи çилпе ÿкес мĕн,
Çурхи шывпа йухас мĕн...

Çапла йурланă вăл ĕлĕк. Вилнĕ поет Çеçпĕл Мишши ĕлĕкхи чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ çинчен çапла çырнă:

„Хура-шур анчах курмашкăн
Кам çуралса ÿснĕ?
Çут тĕнчере йăвăр хурлăх
Кам ытларах тÿснĕ?
Авалтанпа кам кунçулĕ
Тарçăри пек пулнă?"

Хĕрарăм кунçулĕ вăл çапла пулнă, хĕрарăмăн çут тĕнчери йăвăр хурлăха пуринчен ытларах тÿсмеле пулнă.

„Сан чĕрÿ анчах хĕн витĕр
Нимĕн те пĕлместчĕ,
Вучах умĕнче вăрахăн
Ĕмĕрÿ иртетчĕ.
Турчăка, мелкерен урăх
Нимĕн те курман ес..."

Турчăка-мĕлке, выçăллă-тутăллă ача пăчасем, упăшка мăшкăлĕ, тивĕççĕрлĕх— урăхне ырă кунне курман, пĕлмен ĕлĕкхи хĕрарăм. Кам астумаст пулĕ Некрасов сăввисене, кам пĕлмест пулĕ Максим Горькин „Вывод" йатлă калавне?

Иртнĕ ĕмĕрте пурăннă Америкă писателĕ, „Хижина дяди Тома" роман авторĕ, хĕрарăм Бичер Стоу, пĕрехинче хăйĕн дворникĕнчен çапла ыйтнă:

— Кала-ха есĕ, акă сана суйлав прави параççĕ, мана хĕрарăма памаççĕ. Мĕнле, тĕрĕс-ши çавă сан шухăшпа?

Дворник пĕр иккеленсе тăмасăрах çапла ответлет:

— Мĕн ăпланатăр есĕр, хĕрарăмсем, государствă ĕçĕнче?

Пайан кун та капиталисăм тĕнчи çаплах пусмăрпа мăшкăлра тытат хĕрарăма. Пайан кун та вăл унта, „цивилизацилĕ" тĕнчере етем хисепĕнче мар, унăн политикла прависем çук.

Хăйсене ĕмĕрлĕхе халăх ылханĕпе витнĕ фашиссем çак XX-мĕш ĕмĕрти тискер варвăрсем капиталисăм тĕнчин мĕн пур ирсĕрлĕхне, çĕрĕклĕхне кăтартаççĕ. Вĕсен шухăшĕпе хĕрарăмăн мĕн пур тивĕçĕ, пурнăçĕ те кухньăра, ача-пăча пăхса ирттермеле, тата спальнăйра анчах пулмала. „Рейхстагра хĕрарăм ларас пулсан вăл маншăн тÿсме çук намăс йапала пулĕччĕ" тет фашиссен пуçлăхĕ Гитлер Нÿренбергри еиесра.

Капиталисла çĕршывсенче халăхăн çурри — хĕрарăмсем суйлав правипе усă курмаççĕ. Хăшпĕр çĕрте саккун тăрăх права пур пулсан та, çав саккунах вăл правана тĕрлĕ майсемпе пĕтерсе хурат.

Сăмахран Венгрире хĕрарăмсем 30 çула çитсен тин суйлав правипе усă курма пултараççĕ. Унсăр пуçне унăн 10 çул хушши Венгри гражданствинче тăмала, 2 çул пĕр вырăнта пурăнмала, 6 клас пĕтерни кирлĕ, виççĕрен кайа мар „саккунлă" çуралнă ача пулмала тата хăйĕн пурлăхĕнчен кирлĕ тупăш илсе тăмала...

Йепле телейлĕ, йепле кирĕк пирĕн аслă Совет çĕршывĕнчи хĕрарăм! Йепле хавасла, йепле пуйан та илемлĕ унăн пурнăçĕ, ĕçĕ, йуратăвĕ! Йепле пысăк унăн прависем, хисепĕ, тивĕçĕ! Аслă Октябĕрти Социалисăмла революци, совет влаçĕ, Ленин—Сталин партийĕ совет хĕрарăмне мĕн панине пирĕн çĕршывăн ытти саккунĕнче — Сталинла Конституцинче çырса хунă.

Пирĕн хĕрарăмсем арçынпа танах кĕрешÿре, социалисăм строительствинче, пур çĕрте те, пур ĕçре те хăйсен паттăрлăхне кăтартаççĕ. Хăйсен иксĕлми пултарулă вăйне хураççĕ. Мĕн чухлĕ ĕç паттăрĕсем çуралчĕç пирĕн совет хĕрарăмĕсем хушшинче! Мĕн чухлĕ ÿссе çĕкленчĕç вĕсем совет çĕршывĕн мухтавлă та телейлĕ пурнăçĕнче! Ахальтен мар совет халăхĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйланă чухне хăйĕн чи шанчăклă, чи паттăр, мухтавлă хĕрарăмĕсене кандидата тăратат.

Çавăн пек паттăр хĕрарăмсенчен пĕри вăл Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ З. А. Андрейева.

Зойа Ананийевăн ашшĕ хĕрĕх çул хушши йалти фельдшер пулса ĕçленĕ. Ĕлĕкхи фельдшер пурнăçĕ çителĕклĕ пулма пултарайман. Çапах та вăл вăй çитнĕ таран хăйĕн хĕрне вĕрентме тăрăшнă. Зойа Ананийевна Иетĕрне гимназинче вĕреннĕ. 5-мĕш класа çитсен усрама вăй çитереймен пирки ăна вĕрентме пăрахтарасшăн пулнă, анчах, вăл тем пулсан та вĕренме пăрахман.

1917 çул çуркунне Зойа Ананийевна Çĕрпÿри гимназинче 7-мĕш клас пĕтерсе тухат. Гимназийе пĕтерме ăна вăл вăхăтсенче питех те йăвăр пулнă. Укçатенкĕ çитмен. Начар çитернĕ. Ун чухнехи вĕренекенсене государствă пулăшасси пулман. Курбатов хуçа попечител вырăнĕнче шутланнă, паллах ун пек попечителсем пулăшма пултарайман.

Çĕршывра аслă пролетарилле революци пулса иртет, совет влаçĕ пуçланат. Хайар кĕрешÿ пырат. Хуçалăх йухăнса çитнĕ. Пурнăç питех те йăвăр.

Зойа Ананийевна учителницă. Вăл мĕн пур хĕрÿлĕхне, çамрăк вăйхалне халăха вĕрентес ĕçе хурат.

Вăл ачаран халăхшăн ĕçлес ĕмĕтпе ÿснĕ. Малтанах вăл врач пуласси çинчен ĕмĕтленнĕ. Çав тери врач пулса ĕçлесси килнĕ унăн. Анчах врач пулма вăл ĕçе вĕренме май килмен... Вăл учителницă. Ку ĕçе те Зойа Ананийевна килĕштернĕ. Вăл ачасене хытă йуратнă. Вĕсене хăйĕн мĕн пур пĕлĕвне, вăйне панă. Вĕсенĕ вĕрентсе ÿстерес ĕç унăн пурнăçĕ пулнă.

Аслă революци йала вăратнă, тĕттĕмлĕхре, пусмăрта пурăннă хресчен массисене çĕнĕ пурнăç тума кĕрешĕве çĕкленĕ. Культурă кунĕ.

Зойа Ананийевна хăй ĕçлекен Çĕрпел йалĕнче (Çĕрпÿ р.) культпросвет кружокĕ организацилет. Унта 40—45 çулхи мужиксем, хĕрсем, хĕрарăмсем çÿреççĕ. Политикă çинчен, йалхуçалăх, культурă ыйтувĕсемпе калаçусем ирттерет, вулат, вĕренет.

Улахсем тăрăх çÿрет. Халиччен кĕнеке тытса курман чăваш хĕрĕсене „Нарспи" вуласа парат. Йурăсем йурлаттарат. Тĕн сийĕнĕ çинчен каласа ăнлантарат. Çамрăк хĕрсем, ачасем ун тавра пухăнаççĕ, чăмăртанаççĕ. Йуратаççĕ ăна, ĕненеççĕ, шанаççĕ.

Йалта стена хаçачĕ тухма пуçлат. Сцена тăваççĕ. Драмкружок ĕçле пуçлат. Халăх культурă патне туртăнат, çĕкленет. Йалти учителницă тавра чи малтанхи вăйсем—йалти актив тĕвви чăмăртанат. Зойа Ананийевна çамрăксенчен комсомол йачейки организацилет.

Чиркÿ старăсти активлă учителницăран хăраса ÿкнĕ.

— Ку Ананий Андрейевич хĕрĕ пĕтерет пире!—тесе çÿрет вăл.

Ананий Андрейевич хĕрĕ вĕсемшĕн чăнах та хăрушă çын пулнă. Зойа Ананийевнăсăр йалта пĕр халăх пуххи иртмен, пĕр ĕç пулман. Шкултан вĕрентсе таврăннă хыççăн вăл ытти вăхăтне халăх хушшинче, халăх ĕçĕнче ирттернĕ.

1924 çулта Çĕрпел йалĕнче йатак тăрăх çĕр валеçнине аван астăват Зойа Ананийевна. Унччен унта çĕр валаçĕнмен пулнă.

Çĕр валеçесси йал пурнăçĕнче мĕнле тавлашулă ĕç пулнине пурте пĕлеççĕ. Ку ĕçре кулаксем уйрăмах пĕр-каварлă пулнă, уйрăмах çĕр валаçессине хирĕç пулнă. Ĕлĕкрен ултавпа та, ĕçкĕпе те, укçапа та чи аван çемçе çĕрсене хăйсем аллине илсе тытса тăнăскерсем, вĕсем, тислĕк анисене алран вĕçертесшĕн пулман. Халăх пуххине хытă хатĕрленсе пынă, хресченсене нумайĕшне хăйсен вăй çаварсешăн тăрăшнă. Анчах Зойа Ананийевна тавра йалти актив пулнă. Йалти чухăнсем, вăтамсем ун йенче тăнă. Халăх пуххи çав тери тавлашулă, тăвăллă иртнĕ. Кулаксем çĕр валеçессине хирĕç пулнă.

Сасăлаççĕ. Сасăсене шутласа пăхаççĕ. Валеçес текенсем нумайрах. Апла каласан, кулаксем харах сиксе тăраççĕ. Шутланине ĕненмеççĕ вĕсем. Тепĕр хут сасăлама хушаççĕ. Учителницăна шутлаттараççĕ. Зойа Ананийевна шутласан та çаплах тухат. Халăх çĕр валеçессишĕн сасăлат.

Кулаксем урса кайаççĕ. Учителницă халăха улталат, тесе кăшкăрма тытăнаççĕ. Халăха пăтратаççĕ.

Зойа Ананийевна кружокĕнче тăраканни пĕри пĕр шухăш парат.

— Халăхсем, тет вăл, атăр, урама тухар. Хурал пÿрчĕпе йунашар шыв йухса выртат. Вăл пирĕн сасăсене уйăрса парĕ. Кам çĕр валеçес тет—шывăн пĕр йенне йултăр, кам валеçес кар тет — тепĕр йенне каçтăр.

Халăх кĕрлесе урама тухат. Кĕрлесе йухан шыв ик йенне уйăрăлса тăрат. Леш йенче пуйан кулаксем сахалăн тулхăрса тăраççĕ, ку йенче йал халăхĕ, чухăнсем, вăтамсем, Зойа Ананийевна майлисем, çĕр валеçес текеннисем. Халăх, икке уйăрăлса хăй тĕрĕслĕхне тупрĕ. Кам тĕрĕссине, хăш йенче чăн-чăн вăй иккенне курчĕ. Чăн-чăн вăй чухăнсен вăтамсен йенче. Кулаксем вĕсене хирĕç, вĕсем шыв леш йенче, вĕсем халăх тăшманĕсем.—Акă, куртăр, вĕсем кама хирĕç тăраççĕ, акă курăр мĕн уйăрса тăрат пире, тет Зойа Ананийевна.

Кайран та вăл хăйĕн пурнăçĕнче йаланах тăшмансене çапла халăхран уйăрма, паллама, вĕсем çине тĕллесе кăтартма пĕлнĕ, вĕсемпе кĕрешме халăха организациленĕ, çĕкленĕ.

1925 çулта Зойа Ананийевнăна Вулĕçтăвкома суйланă. Ăна вĕренсе çитнĕ йал, ăна йуратнă йалти халăх çав тери кăмăллăн ăсатат. Ăсату пуххи тăваççĕ. Парнесем параççĕ, сăвăсем калаççĕ. Пĕрле ĕçлени, активлă пулни халăха учителницăн хытă çывăх. Зойа Ананийевна

Суйлавçă, тĕрĕслесе пăх, сан йатна, аçу йатне, хушаматна суйлавçăсен спискине тĕрĕс çырса кĕртнĕ-и?

Суйлавçăсем хăйсен кандидачĕсем çинчен

Темĕнле йăвăр ĕçе те çĕнтерсе илет

Йевдокийа Петровна Цыганова йулташпа пĕрле нумайранпа ĕçлетпĕр. Унăн пултарулăхне курса савăнатпăр. Вăл хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне хăйĕн пĕтĕм хастарлăхĕпе пĕлӳлĕхне, ĕçе парать. Çавăнпа та чернорабочирен цех мастăрне çити ӳсрĕ те вăл. Халăх хушшинче „Ĕç мастăртан хăрат" текен халап пур. Чăн та, Йе. П. Цыганова йулташран ĕç хăрат. Вăл темĕнле йăвăр ĕçе те çĕнтерсе илет. Хут те мĕнле вырăна ĕçлеме лартăна, вăл çав ĕçе тăватех, сийелтен тата йăлишĕн мар, тĕплĕн, лайăх, пĕтĕм ăшри кăмăлтан тăват.

Лайăх астăватпăр. Пирĕн цехра час-часах простойсем пулатчĕç. Çав простойсене пула ĕç нормисем тулмастчĕç, рабочисен ĕç укçи те чакатчĕ. Йе. П. Цыганова йулташ йаланах хумханатчĕ. Простойсен сăлтавне никам та мар, вăл шыраса тупрĕ. Производствăлă канашлура завком, дирекци умĕнче ыйту лартрĕ. Пурне те хускатрĕ, простойсене пĕтертĕмĕр. Нормăсене кашни кунах 120—150 процент тултарма пуçларăмăр.

Нихăçан та ывăнма пĕлмест, ĕçсĕр тăма йуратмасть. Кашни рабочипе вăл чĕрери кăмăлпа калаçать, тимлĕн вĕрентет. Рабочи пĕлмен ĕçе хăй аллипе ĕçлесе кăтартать. Вĕренӳре, общественăлă, агитаципе пропагандăлă ĕçсенче, та салăхшăн кĕрешес çĕрте, пур çĕрте те—вăл. Комбинатра стахановла йухăма пуçаракансенчен пĕри Цыганова йулташ пулчĕ.

Йе. П. Цыганова йулташ ĕççыннисен ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлет. Вăл ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама тивĕçлĕ, шанчăклă кандидат. Епĕр тăван çĕршывăн лайăх хĕрĕшĕн, Йе. П Цыганова йулташшăн, сасăлатпăр.

Хăма çуракан цехри рамщик-стахановецсем.

Феклин, Матушкин.

Пире вăл нумай пулăшнă

1928 çулта епĕ Нĕркеçре (Патăрйел районĕ) Крестком председателĕ пулса ĕçлеттĕм Çак вăхăтра пирĕн пата О. Т. Харитонова йулташ тырпул хатĕрлес кампанийе ирттерме килчĕ. Вăл чухăнсен йалти активиссен пухуне туса ирттерчĕ. Унта кулаксене тĕппипех пĕтерессi çинчен тĕплĕ ăнлантарса пачĕ.

Çакăнтан пуçларăмăр епĕр йалта тарăн тымар йанă кулаксене кăклама. Кулаксем пире хăратаччĕç, анчах çирĕп большевик Харитонова йулташ пĕтĕçтернĕ актив кулаксене парăнмарĕ, вĕсене вирлĕн кăклама пуçларĕ.

Епĕр Харитонова йулташ пулăшнипе хамăр йалти колхоза кулаксенчен тасатса, унта чухăнсене ăнлантарса кӳртсе, вĕсене чăн-чăнах çĕнĕ пурнăç çулне тупса паратăмăр. Çавăнпа та нумайĕшĕ ĕлĕк чухăн пурăннă çынсем, халь колхозра лайăх пурнăçпа пуранакан колхозниксем Ольга Тихоновнăна ыра йатпа асăнаççĕ.

Нĕркеçри „Шмидт" колхоз председателĕ, Патăрйел округ суйлав комиссĕи членĕ—**Карпов.**

Краснов йулташшăн сасăлатăп

Епĕ 1919 çулта çуралнă. Кăçал пирвайхи хут Аслă Совета Сталинла Конституци тăрăх суйламалли суйлавра пулатăп. Ку мана питĕ савăнтарать.

Совет Сойузĕнче пĕтĕм халăх телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнать. Çынна çын пусмăрласси çук. Çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа пире Аслă Сталин йулташ туса пачĕ. Çавăншăн ăна епĕр вĕçĕ-хĕрисĕр йуратăп.

Халĕ епĕ Йетĕрнери йалхуçалăх техникумĕнче вĕренетĕп. Епĕ алгебрăпа—отлично, геометрипе—отлично, ытти предметсем тăрăх хорошо паллăсем илсе пыратăп.

Епĕ Аслă Совета суйламалли Положени çинчен лайăх пĕлетĕп. Кружок занятийĕсене йĕркелĕ çӳрерĕм. Тата пĕрмайăх хаçатсем вуласа пыратăп. Вăл мана суйлав саккунне тата лайăхрах ăнланма пулăшать. Çĕмĕрле суйлав округĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем, колхозницăсем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Йетĕрне районĕнчи Тури Ачакрк „Крестьянская газета" колхоз председателне—орденоносец Андрей Михайлович Краснов йулташа палăртрĕç. Краснов йулташ йертсе пыракан колхоз кунран кун çирĕпленсе пырать. Колхозниксем пуйан та культурлă пурăнаççĕ. Унăн ĕçри ӳсĕмĕсене курса партипе правительствă Краснов йулташа пысăк наградă—Хĕрлĕ Ĕçйалав орденĕ пачĕç. Краснов—Парти Чăваш Обкомĕн, комсомол Обкомĕн, ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕн членĕ; комсомолта 14 çул, партире 6 çул тăрать. Вăл йертсе пынипе колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренес тĕлĕшпе агитаторсен курсĕ пулса иртрĕ. Курса 20 колхозник пĕтерсе тухрĕç. Вĕсем халĕ 4 килпе организациленĕ кружоксенче суйлав саккунне вĕрентеççĕ. Епĕ Андрей Михайлович Краснов кандидатурине ырлатăп. суйлав вăхăтĕнче хамăн сасса унăн кандидатуришĕн паратăп.

С. Кондукторов.

ПСК(б)Парти Ишлей райкомĕн секретарĕ Федоров йулташ довереннăйсемпе занятий ирттерет

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Суйлав çинчен кăларнă литературăна нумай илеççĕ

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли кун çывхарса килнĕ май, ĕççыннисем Сталинла Конституци çинчен кăларнă кĕнекесене ытларах ыйтма пуçларĕç.

Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи кашни суйлав участкинчех суйлав çинчен çырнă кĕнекесене сутма пĕчĕк киоскĕсем уçнă. Вăл киосксенче 3 пин те 50 кĕнеке сутнă.

Бибколлектор организацисем тăрăх 1.400 кĕнеке сутнă. Вăл шутран кулыпромсойуз 54 ертел валли 1.121 тенкĕлĕх библиотекăсем илне. Кашни библиотекăна 50—60 кĕнеке кĕрет.

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче шкул ачисем Шупашкарта кашни килех кĕрсе суйлав Положени кĕнекине сутса çӳренĕ. Вĕсем кун каçа мĕн пурĕ 6.725 екземпляр кĕнеке сутнă. Çав кунах тата кĕнеке магазинĕ çумĕнче урамра 1.000 екземпляр кĕнеке сутăннă.

Пуринчен ытла „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положени" нумай сутнă, Положени Шупашкар хулинче 21.000 екземпляр, Çĕрпӳ хулинче 26.000 екземпляр сутăннă. Çĕрпӳре ку шутра 21.000 екземплярĕ чăвашла куçарни пулнă. „Наша родина" кĕнекене Мускавран 5.381 екземпляр илсе килнĕ. Вăл пĕтĕмпех сутăнса пĕтнĕ. Çак кунсенче 9 пин кĕнеке килмеле.

А. Й. Вышинскин „Положение о выборах в Верховный Совет СССР в вопросах и ответах", М. И Калининăн „Что дала Советская власть трудящимся" кĕнекесене, ССР Сойузĕн Конституцине халăх питĕ нумай илет.

Çавăн пекех халăх лозунгсемпе плакатсем нумай ыйтать. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли йĕркесем тăрăх 6 пин плакат илсе килнĕ. Вĕсем пĕтĕмпех сутăннă.

Суйлавçăсен мĕн пĕлмеле?

Суйлавçăсен спискисенче пăсса çырнисем пулсан жалăбă парас йĕрке

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлавçă участкăри суйлав комиссине, сасăлама уйăрнă çурта пырса хăй камне пĕлтерекен документа кăтартсан, комиссин чи малтан çак çын суйлавçăсен спискинче тăнипе тăманнине тĕрĕслес пулать. Суйлавçă спискăра пур пулсан, ăна алла суйлав бӳллетенĕсемпе йышăннă образецлă конверт параççĕ.

Суйлавçăн йачĕ спискăра çук пулсан, ăна сасăлаттармаççĕ. Саккун тăрăх ирĕкрен килнисем, тепĕр тĕслĕ каласан, суйлавçăн спискине кăларса çапнă вăхăтпа суйлав вăхăчĕ хушшинче хăй пурăнакан вырăна улăштарнă çынсем кăна, спискăра йачĕсем çук пулсан та сасăлама пултараççĕ. Çавнашкал çынсемшĕн пирĕн совет суйлав саккунĕ „сасăлас права паракан удостоверени" парас йĕрке тунă, çав удостоверенисене малтанах йышăннă формăпа вырăнти совет парать, ун çинче советăн председателĕпе секретарĕ алă пусмала. Çавăн пек удостоверенийе кăтартсан çĕнĕрен пынă çынна ытти суйлавçăсемпе танах сасăлаттараççĕ.

Çапла вара, суйлавçăсен спискисем граждансем вĕсене саккун тăрăх панă суйлав правине пурнăçа кĕртессинче питех те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн саккун тăрăх суйлавçăсен спискисене хулара—хула совечĕ, районсене пайланакан хуласенче—район совечĕ, йалсенче—йал (станицă, йал, хутор, кишлак, аул) совечĕ тăвать. Çар чăçĕсенче тата çар пĕрлешĕвĕсенче суйлавçăсен спискисене командовани тăвать, ун çине командирпа военный комиссар алă пусаççĕ. Ытти пур çар служăщисене те суйлавçăсен спискине вĕсем пурăнакан вырăнти советсем кĕртеççĕ.

„ССРС Аслă Советне суйламалли Положени"—Советсене суйлав кунĕ çитиччен 30 кун маларах суйлавçăсен спискине пурне те пĕлтерме кăларса çакма йе çак спискăпа совет çуртĕнче паллашма май туса пама хушать.

Кашни суйлавçăн тивĕçлĕ ĕçĕ—хăй спискăна пăхса, хăй тĕрĕслесе, ăна хăйне спискăна кĕртнипе кĕртменнине пĕлесси, унăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне тата адрĕсне пăсса çырманнине пĕлесси.

Халĕ ĕнтĕ суйлавçăсен спискисене пурне те пĕлтерме кăларса çакнă, анчах çакна пур çĕрте те туман-ха. Хăшпĕр çĕрте суйлавçăсем халиччен те спискăсене курма пултараймаççĕ. Чылай районсенче суйлавçăсен спискисенче çырмасăр йулнисем йе пăсса çырнисем тĕл пулаççĕ.

Суйлавçă хăйне спискăна кĕртменнипе йе саккуна пăсса спискăран кăларнине курсан, йе спискăра унăн йатне, хушаматне пăсса çырнине курсан, унăн мĕн тумала-ха? Спискăна суйлав прависĕр хăварнă çынсене кĕртнине курать пулсан, мĕн тумала-ха суйлавçăн? Çакăн пек чухне суйлавçăн çавăн çинчен зайавлени çырса **спискăна хăш Совет кăларса çапнă**, çав совета памала. Советăн çавнашкал зайавленисене хут çине çырнисене те, сăмахпа каланисене те йышăнмала. Саккун суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă кашни зайавленийех виçĕ кунлă срукра пăхса тухма хушать. Суйлав кунĕ çитнĕ çĕре Советăн спискăсене пĕтĕмпех тӳрлетсе çитермеле.

Ытах та Совет кирек мĕнле сăлтавпа та пулин суйлавçăн зайавленине ăна паракана майлă татса памасан, унăн зайавлени паракан ыйтăва майлă татса паманнин сăлтавне кăтартса справкă çырса парас пулать. Ытах та суйлавçă совет решенипе килĕшмесен, вара саккун ăна **халăх судне** жалăбă пама права парать.

Халăх сучĕн çавнашкал жалăбăсене **виçĕкунлă** срукра уçă суд ларувĕнче зайавлени паракanpa Совет представителне чĕнсе пăхса тухмала. Халăх сучĕн хăйĕн решенине пĕр тăхтамасăр зайавлени паракана тата Совет представителне пĕлтермеле. Зайавлени паракан йе Совет представителĕ суда пыман пулсан, халăх сучĕ ĕçе тепĕр чухне пăхса тухмала тума йе ĕçе вĕсем çук пулсан та пăхса тухма пултарать, вара хăйĕн решенине пĕр тăхтамасăр зайавлени паракана та, Совета та, вĕсем патне решени ӳкерчĕкĕсене йарса, пĕлтерет. Халăх сучĕн решенийĕ татăклă шутланать.

Халăх судне жалăбă пама: суйлавçăсен спискине тунă чухне вĕсем тĕлĕшпе Совет тĕрĕсмарлăхсем тунă тесе шутлакан граждансем те, çавнашкалах суйлавçăсен спискине вăл-ку çынна, суйлав прависĕррине кĕртнĕ, тесе, йе суйлав правилĕ çыннах спискăна кĕртмен тесе шутлакан граждансем те пултараççĕ.

Саккун суйлавçăсен интересне шута илсе суйлавçăсен спискисене кĕртмесĕр хăварнă пирки, йе спискăра пăсса çырнă пирки панă зайавленисемпе жалăбăсене пăхса тухма питĕ кĕске срухсем тунă. Çак срук—виçĕ кун. Çав срука çирĕп тытса пымала. Кунта нимле волокитă та пулмала мар.

Совет суйлав саккунĕ — суйлавçене чăннипех те пĕтĕм общественăлă, пĕтĕм халăхлă тăвакан тĕнчери пĕртен-пĕр саккун. Пирĕн тăван çĕршыври кашни гражданинăн тивĕçлĕ ĕçĕ—суйлав саккунне ним чухлĕ те пăсма, саккунтан пăрăнма памала мар.

Тăрăн йалсоветĕнче

Тăрăн йалсоветĕнче (Патăрйел р.) 3 суйлав участки. Вăл участкăсенче суйлав спискисем çакăнса тăраççĕ. Спискăсене тĕплĕ тĕрĕслесен, хăшпĕрин йачĕсене пăтраштарса çырнисем палăрнă, вĕсене вăхăтра тӳрлетнĕ.

Кашни участкăрах суйлав ирттермелли çуртсене тирпейлесе çитернĕ. Тăрăн йалĕнче суйлав ирттерме клуб çуртне хатĕрленĕ, ăна уйрăм пӳлĕмсене уйăрса плакатсемпе, лозунгсемпе илемлетнĕ. Çавăн пекех Кĕçĕнпатăрйелпе Тренйелĕнче те суйлав çурчĕсем хатĕр. Пионерсемпе шкул ачисем ку çуртсене илемлетес тĕлĕшпе нумай пулăшнă. Вĕсем плакатсем, лозунгсем, диаграмăсем çырса панипе пĕрлех, суйлав саккунне ĕçхресченĕсене тĕплĕ ăнлантарас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйрăмах Тăрăнти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем кил тăрăх çӳресе суйлав саккунне вуласа ăнлантарса параççĕ тата шкулта спектаклĕсем, вечĕрсем туса ирттереççĕ.

Суйлав саккунне вĕренес ĕç йалсовета кĕрекен виçĕ йалта та хĕрӳлĕ пырать. Шкулсенче вĕрентекен учителсем пурте агитатор пулса ĕçлеççĕ тата вĕсем агитаторта ĕçлеме уйăрнă уйрăм колхозниксене консультаци парса пулăшса пыраççĕ. Сăмахран, Дмитрийев учител-комсомолец Кĕçĕнпатăрйелĕнчи агитаторсемпе час-часах калаçусем туса ирттерет, вăл вĕсене О. Т. Харитонова йулташ пурнăçĕпе тĕплĕ паллаштарать. Унтан агитаторсем кашни 10 киле пĕрле пухса занятисем туса ирттереççĕ. Виçĕ йалепе мĕн пурĕ 45 çын агитатор пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем суйлав саккунне ăнлантарса панипе пĕрлех Аслă Совета суйлама тăратнă Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсен пурнăçĕсемпе ĕçхресченĕсене тĕплĕн паллаштараççĕ.

Тата Патăрйелĕнчи педучилищă хăй шефа илнĕ çак виçĕ йалта культурăлла-массăлла ĕçе чертсе йана Кĕçĕнпатăрйелпе Тренйелĕнче походпа кайса спектаклĕсем, хор, струнлă оркестр кружокĕсен пултарулăхне кăтартнă. Вăл походсенче 50 комсомолец, 128 студент хутшанса ĕçленĕ. Анчах вĕсем суйлав саккунне ăнлантарас ĕçре йалти агитаторсене пулăшас тĕлĕшпе çителексĕр ĕçлеççĕ-ха, малашне вĕсен ку çитменлĕхе пĕтермелле.

Тăрăн йалсовет председателĕ Крылов йулташ йалсоветра суйлава хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен çапла калать:

— Епĕр халь суйлав ирттерме кирле пур йапаласене те халех хатĕрлесе хуратпăр. Нумай пулмасть епĕр çителеклĕ тăрăн ручкăсем, перосем, чернил илсе хатĕрлерĕмĕр, халь виçĕ участкă валли лампăсем тата ытти кирлĕ йапаласем хатĕрлетпĕр,—тет.

Йалсоветра йатарласа уçнă справкă паракан бӳро ĕçлет. Унта ĕçхресченĕсем суйлав умĕн хăйсем мĕн пĕлменнине тĕплĕн ыйтса пĕлеççĕ.

Ф. Çитта.

Пирĕн тăван çĕршывра суккăр çынсем те телейлĕ

ЙЕТĔРНЕ. Александр Миронов—Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхозăн тулли правалă членĕ. Унăн куçĕсем пачах курмаççĕ. Апла пулсан та Миронов колхозник йалти общественăлă пурнăçа активлăн хутшăнать. Пухусене пĕр сиктермесĕр çӳрет. Халĕхи вăхăтра колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ; Миронов йулташ та çĕнĕ суйлав саккунне çине тăрсах вĕренет, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—Аслă Совета суйламалли кун—вăл хăйĕн сасне халăх телейĕшĕн тăрăшакан, тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн парат.

Александр Миронов, суккăр пулсан та, пирĕн тăван çĕршыври мĕлйун-мĕлйун ĕççыннисем пекех, телейлĕ пурăнать. Çак кунсенче вăл 4-мĕш бригадăна 10 тилхепе, 20 хăмăт валли пăйавсем йавса пачĕ. Миронов йулташ Совет Сойузĕнчи халăхсене телейлĕ те хавăслă пурнăç туса панăшăн аслă çулпуçне Сталин йулташа чунтан-чĕререн тав тăват.

А. Соловйов.

Мастерской уçалать

КУСЛАВККА. Тĕмшер йалĕнчи „Комсомолец" алăста ертелĕ çумĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă кун тĕлне дивансем, корзинкăсем тăвакан мастерской ĕçлеме тытăнать.

Çак мастерскойа тунă çĕре 38 пин тенкĕ укçа кайнă.

Вас. Давыдов.

та пĕр вĕреннĕ йалтан уйрăлса кайас килмест. Йуратнă шкул ачисенчен уйăрăлнă чухне унăн куçĕсем шывланаççĕ.

Кайран, Вулĕçтăвкомра ĕçленĕ чухне, вăл хăй ĕçленĕ йала çĕнĕ шкул лартма пулăшать.

Вулĕçтăвкомра унăн председател пулса та ĕçлеме лекнĕ. Ĕç çăмăл пулман. Анчах Зойа Ананйевна çирĕпленсех пынă. Вăл коммуниссен партин членĕ, унăн активлă работникĕ.

1926 çул, апрел уйăхĕ. Зойа Ананйевна Çĕрпӳ Укомĕнче хĕрарăм пайĕн инструкторĕ.

Çав çулах кĕркунне вăл виçĕ уйăх хушши Чиричкасси шкулĕнче (Çĕрпӳ р.) ĕçлет. Хăйĕн малтанхи йуратнă ĕçне пăрахас килмест унăн.

Республикре районировани пулса иртет. Зойа Ананйевна Канашра парти райкомĕнче хĕрарăм пай пуçлăхĕ. Районра хĕрарăмсем хушшинче вăл пысăк ĕç пуçласа йарать. Чăх-чĕп ĕрчетмели вунă ертел уçать. Ертелсен ĕçĕ: чăх-чĕпсене ăратлантарасси, вĕсене ĕрчетесси, пăхасси. Вĕренӳ пуçланать.

1928—29 çулсенче Андрейева йулташ çак ĕçпех Мускав çывăхĕнчи совхозра курсра вĕренет.

Кунта та унăн çивĕч кĕрешĕве хутшăнма лекнĕ.

Совхозра директорĕ те, унăн заместителĕ те ĕлĕкхи помещиксем пулнă мĕн. Вĕсем 5 пин чăх вăрттăн вĕлерсе пытарнă, сăтăрланă. Курсра вĕренекен батраксене кăларса йама хăтланнă т. ыт. Курсри коммуниссем ку сăтăрçăсене тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкнă, суд умне тăратнă. Çак кĕрешӳре те Андрейева йулташ хăй хутшăнса пысăк опыт илет, пиçĕхет.

1930 çул вăл Канаш районĕнче инкубатори уçать. Коллективизаци ĕçне активлăн хутшăнать.

Кайарах, РКИ-ре ĕçленĕ чухне, унăн нумай тăшмансене тăрă шыв çине кăларма лекнĕ, вĕсемпе, вĕсене хӳтĕлекенсемпе кĕрешмеле пулнă. Камăн ĕçĕсем ун алли витĕр тухнине, йама хирĕç тăрса кĕрешмеле пулнисене лайăх астăват Андрейева йулташ.

Акă, аш-какай Сойузĕнче пĕр Соловйов хушаматлăскер ĕçлет. 600 тоннă таран какайа таçта салатса йанă. Андрейева йулташ типографинчи рабочисенчен тата ытти çынсенчен бригадă туса ку ĕçе тĕрĕслет. ОКК Соловйова партирен те, ĕçрен те кăлармала тăвать. Анчах Обкомра Андрейевсем хирĕç. Соловйова партире хăвараççĕ, Гортра лартаççĕ. Кайран çапах ĕçрен сирпĕнет Соловйов. Йурйев, Андрейев, Анчиков хӳтĕленипе анчах суда лекмесĕр йулать вăл.

Гортра тепĕр Пантеров хушаматлă çын ĕçленĕ. Çĕпĕрте таçта суту-илӳ туса çӳренĕскер вăл партине ултавпа кĕрсе кайать, кунта килсе ĕçе вырнаçать. Çав тери чиййескер вăл çĕлен пек авкаланать, ниçтан та тытма çук ăна. Андрейева йул. 3 уйăх хушши ун ĕçне тĕрĕслет, тăшмана тăрă шыв çине кăларать. Ун пеккисемпе Зойа Ананйевăн нумай кĕрешме тивнĕ.

Чăваш АССР X-мĕш сиесĕ Зойа Ананйевнăна Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членне суйлать. Вăл Социаллă пулăшу халăх комиссарĕ пулса тăрать.

Ку ĕçре Андрейева йулташ инвалидсене, суккăр, чĕлхесĕр, хăлхасăрсене нумай пулăшу парать. Районсенче вĕсене валли производствăла мастерскойсем уçать. Чĕлхесĕр-хăлхасăрсен хушшинче ĕç нормине 200—220 процент таран тултаракансем пур. Зойа Ананйевна укçак-сийенлĕ ачасене валли Нурăсра ача çурчĕ уçать, т. ыт. Чăн пулăшăва тивĕçлĕ çынсене пулăшу парас ĕçпе вăйне хурса ĕçлет.

Иулашки вăхăтра Зойа Ананйевна ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш Республикĕнчи уполномоченнăйĕн аппаратĕнче ĕçлерĕ.

Халăх тăшманĕсене, буржуалă-националисĕсене тăрă шыв çине кăларас ĕçе Андрейева йулташăн нумай вăй хума лекнĕ. Кузнецов йышшисем хăйсен арăмĕсем урлă та пулин ун çинчен елексем сарма пăхнă, ăна такăнтарма тăрăшнă. анчах Андрейева йулташ хăй ĕçĕнче йаланах çирĕп большевик пулнипе, тӳрĕ принциплă çын пулнипе, ăна вĕсем нимĕн те тăвайман.

Чăваш хĕрарăмĕ—йалти учительницă—республик Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕ—акă ирĕке тухнă совет хĕрарăмĕн мухтавлă çулĕ, ӳсĕмĕ. Акă, социалисăм çĕршывĕ, Ленин—Сталин партийĕ ӳстернĕ хĕрарăм сăн-пичĕ. Ун çине пăхса пĕтĕм республик савăнать, пĕтĕм республик хăйĕн тĕпĕçтăвком председательне саламлать.

Тĕпĕçтăвком председателĕ Зойа Ананйевна умĕнче питех те пысăк задачсем тăраççĕ. Коммуниссен партийĕ, аслă Сталин йулташ йертсе пынипе Ленин орденне илнĕ Чăваш республикине тата пысăкрах утăмсемпе малала йарасси, унăн хуçалăхне, культурине тата çӳлерех çĕклесси. Тĕп ыйту вăл совет кадрĕсене вĕрентсе ӳстересси, совет аппаратне çамрăк çĕнĕ вăйсемпе çирĕплетесси. Вырăнсенче халь час-часах çамрăксене ĕçе хутшăнтарма хăранине, шанманнине тĕл пулма пулать. Кун пеккисемпе çине тăрсах кĕрешес пулать. Государствă аппаратĕнче çирĕп дисциплинă кĕртмеле, аппарата тăшмансен йулашкисенчен тасатмала. Вĕсем халь те хăшпĕр ĕçе чăрмантарса тăраççĕ-ха.

— Акă, финанс планне республикă нойабĕрĕн 1-мĕш тĕлне 34 проц. анчах тултарнă,—тет Андрейева йулташ.—Каламалла, намăс. Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунçула кăçалах туса пĕтерес пулать. Чукунçулĕ уçăлнипе пĕрле пирĕн çĕнĕ заводсем, предприйатисем пулмала, промышленнăç ӳсет. Хуласене, сăмахран Шупашкара, çине тăрсах йĕркене кĕртессиз,—тет малала Зойа Андрейева,—пысăк ĕç, пайанах тумалли ĕç. Хватер кризисне пĕтермеле, çĕнĕ çуртсем лартмала. Халиччен хула совечĕ хăйĕн çурчĕсене хуçалăх организацисене парса пĕтернĕ те, лешсем йамăт çуртсенче пурăнаççĕ, çĕнĕ çуртсем лартмаççĕ. Хула çыннисем хватерсĕр аптăраççĕ. Малашне ку йĕрке пулмала мар.

Пайанхи кун пĕтĕм Совет çĕршывĕнчи халăхсем ССРС Аслă Советне суйламалли куна хатĕрленсе пĕтерçĕ. Суйлав кунне ирттерме çеç мар хатĕрленмеле пирĕн, çав историле чаплă куна республикре пысăк производствăла çитĕнӳсемпе, çĕнтерӳсемпе кĕтсе илмеле.

— Задачсем, ĕçсем, ĕмĕтсем пысăк,—тет Зойа Ананйевна. Манăн хам çине халăх шаннине, парти шаннине ӳкермеле мар, епĕ çавăн пек пысăк шанчăка, хисепе тивĕç пулнине ĕçпе кăтартмала. Тата манăн чăваш хĕрарăмĕн, совет хĕрарăмĕн йатне те ӳкермеле мар... Паллах, епĕ ӳкерес çук.

Хĕрарăм - председател Тĕпĕçтăвкома пырсан, ĕлĕкхи руководствăн (тасалса пĕтеймен) хӳрешкисем пăркаланма та пăхнă. Жуков йышшисемшĕн хĕрарăм хушни кăмăллах мар пулнă. Анчах Зойа Ананйевна, хĕрарăм-большевик çирĕп алăпа, пысăк енергипе хăйĕн ответлăран та ответлă пысăк ĕçне туса тăрать, Ăна республикри ĕçхалăхĕ пĕлет. Зойа Ананйевна халиччен те чунран-чĕререн парти ĕçне, халăх ĕçне тунă, халь те ĕçлесе тăрать. Чăваш республикинчи чи паттăр хĕрарăмсенчен пĕрне, ăна, Шупашкар суйлав округĕнчи суйлавçăсем ССРС Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

— Шупашкар округĕнчи ĕççыннисем мана Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртса ман çине пысăк шанчăк хучĕç, пысăк чыс турĕç,—терĕ З. А. Андрейева йулташ нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче суйлавçăсен пухăвĕнче.—Епĕ вăл чыса çирĕппĕн алăра тытса тăма пулатăп. Вăйа шеллемесĕр Ленинпа Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пулатăп,—терĕ.

Большевиксен сăмаххипе ĕçĕ уйăрăлса тăмасть. Ирĕке тухнă чăваш халăхĕн мухтавлă хĕрне, Ленин—Сталин партийĕ ӳстернĕ çирĕп большевика епĕр Шупашкар суйлав округĕнчи ĕççыннисем савăнсах Аслă Совет депутатне суйлатпăр. Ун çинче епĕр социалисăм çĕршывĕн çĕнтерĕвне, чăваш ĕçхалăхĕн аслă çитĕнĕвне куратпăр. Вăл социалисăм çĕршывĕн чăн-чăн телейлĕ хĕрĕ, социалисăм хĕрарăмĕ. Пирĕн сасăсем уншăн пулĕç!

Уйăп Мишши.

Йединоличниксем колхоза кĕреççĕ

Кăçал пирĕн тăван çĕршыври колхозсем халиччен пулман пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Пуйан та культурăлă пурнăç колхозра çеç пулнине халиччен колхоза кĕмен йединоличниксем те ăнланса илеççĕ. Акă çак кунсенче Нĕркеç йалĕнчи (Патăрйел р.) Шмидт йачĕпе тăракан колхоза икĕ хуçалăх кĕнĕ. Çавăн пекех Карăк-çырми йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) Ксенийа Архипова 4 йедокпа, Павел Шишарйов 6 йедокпа колхоза кĕнĕ.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Испанирен пĕлтерне тăрăх, нойабĕрĕн 24-мешĕнче пăлхавçăсем Мадрид çине каллех бомбăсем пăрахнă. Йулашки уйăхсем хушшинче кун пек тискеррĕн бомбăсем пăрахни пĕрремĕш хут пулна. Хулара 15 çын вилнĕ, 30 аманнă. Мадридăн кивĕ кварталĕсем тата Чамбери рабочи кварталĕ ытларах сийенленнĕ. Пăлхавçăсен самолĕчĕсем Гвадалахара йалĕ çине (тĕпри фронт) вуннер бомбă пăрахнă. 12 çын вилнĕ, нумайĕшĕ аманнă.

Çÿлти Арагонире (хĕвелтухăçĕнчи фронт) пăлхавçăсем республикă позицисем çине çĕнĕрен атакăлама тăнă. Анчах вĕсем атакăлама тăни ăнăçсăр пулнă.

(ТАСС).

Германире чĕртавар çитмест

Чехословаки пичечĕ Германире чĕртавар çитменни çинчен çырса пĕлтерет. „Нейер форвертс" хаçат çапла çырат:

— Чертавар тĕлĕшпе Германи çав тери хĕсĕнсе çитнĕ,—Германири йутçĕршывсене сутма тавар тăвакан фирмăсем хăйсен обйазательствисене пурнăçа кĕртме пултараймаççĕ, вĕсен ирĕксерех машинсем тата металлран тунă изделисем тăратмали договорсене пăрахăç тумала килет.

Германин машиностройени тата металл промышленноçĕсем металл иртнĕ вăхăтри хисепрен 40 процент çеç илсе тăраççĕ. Пĕтĕм чĕртавара вăрçă хатĕрĕсем тăвакан заводсене йараççĕ.

(ТАСС).

Испанин çĕрĕç министăрĕ пĕлтерни

Барселонăран пĕлтерне тăрăх, Испанин çĕрĕç министăрĕ Урибе журналиссемпе калаçнă чухне çапла каласа пĕлтерне:

— Испани республикинче ĕçлекенсем, ĕçхатĕрĕсем тата ĕçлемелли вылĕхсем çитмеççĕ пулин те, акa кампанийĕ вĕçленсе çитнĕ пĕрех. Кăçалхи çул пелтерхинчен сахал мар çĕр акса хăварнă. Çĕре хресченсем çумне çиреплетессисинчен каларна декрет тăрăх (1936 çулхи октаберĕн 7-мешĕнче каларнă декрет), Испани республикин 16 провинцинчи йединоличниксем тата коллективлă хуçалăхсем виçĕ мĕлйун çура гектар çĕрпе усă кураççĕ Ку хисепе Арагони кĕмест, унта çĕре хресченсене парас ĕçе туса пĕтермен-ха,—Каталони те кĕмест—унта выранти саккунсем вăйра. Республика правительстви хресченсене 110 миллион песет укçа, 5 пин тонна тĕштырă тата çĕре çем çетмелисем 117 пин тонна кивçен панă.

(ТАСС).

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

Франциri фашисла заговор

Германипе Италири фашисăм, вăрçăпа тапанас тата вăрă-хурахла пусмăрлас политикă тытса пырса, Йевропăпа Америкăри çĕршывсенче провокацилĕ тата ишĕлтерÿлĕ ĕçсене пит анлăн сарса йана. Англире, Францире, Чехословакире, Австрире, Балканра, Балти тинесĕ таврашĕнчи çĕршывсенче тата Америкари çĕршывсенче,—пур çĕрте те Германипе Итали охранкин агенчĕсем çав асăннă çĕршывсенчи фашиссемпе перле, фашисла авантурăсем çенĕрен тума майсем хатĕрлеççĕ.

Йевропăри демократиллĕ чи пысăк çĕршывра—Францире нумай пулмасть пит анлăн саралнă фашисла заговор пулнине тупна. Фашисла заговор тавакансем республикăла строна пĕтерсе, фашисла диктатура режимĕ туса хурасшăн пулнă. Çав заговора организацилекенĕ „Лига тайной обороны" текен фашисла, терророла организаци. Унăн çар майла кадарсем пур, членесем 50 пин çын таран шутланаççĕ. Фашисла заговор тăвакансем ренегатпа, фашис Дориопа çыхăнса тăнине палăртнă.

Францин полицийĕ пĕтĕм çĕршывепех ухтарусем тата арессем туса иртерне. „Лига тайной обороны" текен фашисла организаци Францире чаннипех граждан вăрçи тума хатĕрленнĕ мĕн. Парижра тата ытти хуласенче те пит вăрттăн тунă хĕçпăшал складĕсем тупнă. Çав складсенче Германире тата Италире тунă хĕçпăшалсем пулнă.

Заговор пит анлăн саралнă. Ăна организацилеме укçа-тенкĕ нумай расхутлани курăнсах тăрат. Францири финанс тата промышленноçри пуянсем заговор организацилекенсемпе туррĕмĕнех çыхăнса тăнă.

Заговор тăвакансем йутçĕршывсенчи фашисла державăсемпе тăччăн çыхăнса тăнă. Çавна фашиссем хатĕрленĕ хĕçпăшала аçтан кÿрсе килни те кăтартса тăрат. Ун çинчен Францири хаçатсенче нумайрахăше уççăнах çыраççĕ.

Халăх фрончен пичечĕ, фашисла заговорщиксене тара шыв çине кăларса, фашисла организацисене чăннипех хĕçпăшалсарлатма тата салатса йама хушат.

Францири коммунисла парти, Францири рабочи класăн тата ĕçхалăхĕн йышла массисен интересĕсене палăртса тăрса, фашисăма хирĕç хăйаррăн кĕрешсе, француз халăхĕн ирĕклĕхĕне никама пăханмалăхне сыхласа хăварма пĕтĕм вăйа хурса ĕçлет.

Урăхçĕршывсенче

** Париж хулинчи выставкăри совет павилйонне çур çул хушшинче çирĕм мĕлйун çын ытла пырса курнă. Совет павилйоненче пулнă експонатсемшĕн пурĕ 265 наградă панă, вăл хисепрен 80 проценчĕ пысăк наградăсем.

** Англи халĕхи вăхатра çар тинĕс строителстви пит пысăк программине пурнăçа кĕртсе пырат 1940 çулччен пурĕ 140 çар карапĕ çĕнĕрен тăваççĕ. Вăл хисепре—5 линкор, 5 авионосец, 23 крейсер, 49 есминец, шыв айĕн çÿрекен лодкăсем 17, 41 тралщик т. ыт. те.

** Рур облаçĕнчи (Германи) фашисла йуçтици профсойуз работникĕсем пулнисене айăплама массăлă процес хатерлет. Суд умне 40 çын йахăн тăратаççĕ, вĕсен хисепенче пуринчен ытла металлист тата йаваç ĕçлекен рабочисен сойузĕн представителĕсем.

** Францири депутатсен палатин авиаци комиçсин ларăвĕнче, комиççин вице-председателе пулна—вилнĕ Ваййан Кутурйе выранне, урте пĕр саслăн коммунисла депутата—Коста суйлана.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

★ ВЫСТАВКĂРА ПУЛМА 15 ПИН КОЛХОЗ ЗАЙАВКĂ ПАНĂ. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хутшăнма зайавленисем парасси массăлăн саралса пырат. Йулашки кăтартусем тăрăх колхозсем, совхозсем, таварлă фермăсем тата йалхуçалăхĕнчи малта пыракансем панă зайавленисене пурĕ 30.072 пăхса тухнă. Йалхуçалăх выставкине кандидата тăратмали колхозсен хисепĕ 15.757 çитнĕ.

★ ЛЕНИНГРАД ОБЛАÇĔНЧИ АГИТ-ПРОБЕГ. Ленинградра облаç тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси çинчен ăнлантарса çÿреме физкултурниксенчен пысăк агит-пробег организациленĕ. Колоннăра 30 мотоцикл тата 10 автомобил. Пĕр автомобилĕ саслă кинопередвижкă илсе çÿрет. Вĕсем колхозсенче суйлав саккунне ăнлантарса пурĕ 1.200 километр тăршĕне çаварнаççĕ.

★ БЛЮХЕР ЙУЛТАШ САМАХĔ КИНО ПЛЕНКА ÇИНЧЕ. Сойузкинохроникăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи уйрăмĕ Совет Сойузĕн маршалĕ Блюхер йулташ Октабĕрти революци 20 çул тултарнă кун каланă сăмахне кинопленкă çине çырнă. Хабаровскра, Владивостокра пулса иртнĕ парадсен ÿкерчĕкĕсем тата Блюхер йулташ сăмахĕ „Октабĕр 20 çул тултарни" йатлă кинохроникă çине кĕреççĕ.

★ АГИТАЦИЛЕ ВĔÇЕВ. РОКК Хабаровск обкомĕ суйлав саккуне вĕрентес тĕлĕшпе тата хĕрлĕ хĕрес ĕçĕпе агитацилĕ вĕçев иртерне. Постышев районĕнчи „Красный Октябрь" колхоза санитари самолĕчĕпе кайса „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенийе" вĕренмелли кружок организациленĕ, вулав çурчĕ уçна тата колхозниксемпе медицинăла малтанхи пулăшу кăтартасси çинчен чылай каласусем иртерне.

★ ИСТОРИЛĔ ÇĔНĔ ФИЛМ. Ленфилм производстви сывăх кунсенче „Волочаевские дни" йатлă çĕнĕ кинокартинă кăларат. Филм 1918—1922 çулсенче Инçет-Хĕвелтухăçĕнче халăхсем Йапони интервенчĕсемпе шургвардейцăсене хирĕç паттăрăн вĕрешнине кăтартат.

★ АСЛĂ СОВЕТА ДЕПУТАТА СУЙЛАМА ПАЛАРТНА КАНДИДАТСЕМ ÇИНЧЕН КĂТАРТАКАН КИНООЧЕРКСЕМ. Ленинградри кинофабриксем Аслă Совета депутата суйлама килĕшÿ панă кандидатсем çинчен йатарласа киноочĕрксем кăларма пуçланă. Кашни кандидат çинчен уйрăм журнал кăларса вĕсене пур кинотеатрсенче те кăтартмала тăваççĕ.

★ Калинин облаçĕнче, Андреаполре В. И. Ленин памйатникĕ лартаççĕ. Памйатнике ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун уçаççĕ.

★ Ростов облаçĕнчи, Тацинск машинлă-трактор станцинчи П. Г. Шаповалов орденоносецăн трактор бригади кăçал кашни урапалă трактор пуçне 2.012 ытла гектар сухаланă. Ку вăл государствă заданине 375 процент тултарни пулат.

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма хатĕрленекен колхозсем

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивеç пама ыйтса Чăваш çĕрĕç халăх комиссариатне 241 колхозран пурĕ 289 зайавкă панă Вăл шутран тĕштырă тĕлĕшпе 204 колхоз, йĕтĕн кантăр—29, махоркă—8, пахча-çимĕç—8, клевĕр вăрлăхĕ тĕлĕшпе 9, вылăх кăшманĕ—1, сат-пахча—3, хăмла—2, пыл хурчĕ йĕнепе 4 зайавкă тата 13 тракторисран, 4 сысна ферминчен, 3 сĕт ферминчен, 3 лаша, 1 сурăх ферминчен, вылăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçре малта пыракансенчен—6, агрономсенчен пĕр зайавкă килнĕ. Ку зайавкăсене пуринчен ытла Патăрйел, Тавай, Йелчĕк районĕсенчен панă. Турхан районĕнчен çеç ку таринччен те пĕр зайавкă та çук-ха.

Канаш, Шăмăршă, Шупашкар районĕсенчен те 5 шер зайавкă çеç илнĕ. Паллах, зайавкăсене сахал пани районри çĕрĕç пайĕсемпе йалхуçалăх специалисĕсем начар ĕçленинчен, выставкă çинчен ăнлантарас ĕçсене çителĕклĕ туса пыманнинчен килет.

Тĕштырă йĕнĕпе выставкăра тăма ыйтса йаракан колхозсем пуринчен те ытларах. Вĕсенчен 12 колхоз вăтам шутпа гектартан 25—30-шер центнер тырпул туса илнĕ, 44 колхоз 20—25-шер центнер тата 95 колхоз 15—20 шер центнер илнĕ. Зайавкă панă колхозсенчен нумай тухăçла тырпул туса илнисем çак колхозсем: Йĕпреç районĕнчи „Хĕрлĕ фронтовик" колхоз 402 гектар çинче кашни гектартан 28,34-шер центнер илнĕ; Патăрйел районĕнчи „Çăлтăр" колхоз 627-гектарла уйра кашни гектартан 26,82 шер центнер, хăшпĕр уйрăм културапа ытларах та илнĕ.

Ку колхозрах бригадир Петухов П. П. 3,64 гектарла участкă çинче кашни гектартан 70,24-шер центнер сĕлĕ илнĕ. „Çăлтăр" колхозрах гектартан 10-шер центнер кантăр сÿсĕ туса илнĕ (7,5 гектар çинчен).

Елĕк районĕнчи „Доброволец" колхозра гектартан 30 шер центнер кантăр сÿсĕ туса илнĕ (13 гектар çинчен).

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Туйташ" колхоз гектартан 17,03 центнер, „Опыт" колхоз 14-шер центнер хăмла туса илнĕ.

Йĕпреçри Крупскайа йачĕпе тăракан колхозра кăçалхи çул кашни хурт вĕллинчен вăтам шутпа 51,7-шер килограм пыл илнĕ, хăшпĕр вĕллерен 120 килограм илнĕ.

Ишлей районĕнчи „Труд" колхозра клевĕр вăрри 5-шер центнер илнĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем республикăра татах та нумай. Анчах кунта çакна палăртма кирлĕ: нумай колхозсенче Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкине тăратмали експонатсене ку таранччен те инструкцире кăтартса панă пек уйăрса хуман-ха, йе инструкци çинче кăтартса панă пек хатĕрленĕ експонатсене тĕрĕс пахса усрамаççĕ. Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим", Куславкка районĕнчи „Динамо" тата Аманик колхозĕсенче експонатсем уйăрăсси çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман, уйăрнă експонатсене те сарайсенче, амбарсенче начар пăхса усраççĕ. Çавăн пекех Патăрйел районĕнче те хăшпĕр колхозсенче експонатсене начар пăхса усранине („Правда", „Хĕрлĕ Патăрйел"). експонатсене шăшисем тата ытти кайăк кĕшĕксем сийенленĕ. Експонатсене инструкцире кăтартнă пек тирпейлĕсе сыхласа усрасси çине йалхуçалăх специалисĕсен, колхоз руководителĕсен тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Кăçалхи çул Октабĕр революцийĕ 20 çул тултарнă йатпа тата Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хатĕрленнĕ майпа республикăри выставкă комитечĕ районсенче йалхуçалăх выставки туса иртерме йышăннă.

Пайанхи куна пур районсенче те, Канаш районĕсĕр пуçне, выставкăсем пулса иртрĕç.

14 районтан килнĕ отчотсем тăрăх çакă курăнса тăрат:

Районсенчи выставкăсене пурĕ 462 колхоз хутшăннă, опытниксем те нумай пулнă, выставкăна курма пынисем пурĕ 54.861 çын пулнă.

Калас пулат, лайăх пулса иртнĕ выставкăсенче те хăшпĕр çитменлĕхсем пулчĕç. Выставкăсенче халăх културипе халăх сывлăхне сыхлас ĕçпе тата çулйĕр тăвас ĕçпе 20 çул хушшинче тунă çитĕнÿсене кăтартайман.

Вăл районсенчи çутĕç пайĕсем, халăх сывлăхне сыхлав пайĕсемпе çулйĕр пайĕсем выставкă организацилес ĕçе хутшăнманнине кăтартса парĕ.

Н. Колесников.

Сулейман Сталскине пытарни

Нойабĕрĕн 26-мешĕнче, Махач-Калара Дагестан халăхĕн поетне Сулейман Сталскине пытарнă. Орденоносец ашугăн тупăкне пиншер ĕççынни ăсатнă.

Масар çинчи хуйхăлă митингра поетăн кĕçĕн ывăлĕ Мусаиб хăйĕн ашшĕне асăнса çырнă сăввисене вуласа панă.

(ТАСС).

Оперативлă сводкă выранне çырнă пĕчĕк фелйетон

Нойабĕрĕн 20-мĕш кунĕ. Учотпа статистикă пайĕн пуçлăхĕ сводкăсен „перечене" çине пăхса тăрат.

— Хăм. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен оперативлă сводкă памала пайан. Мĕнле, хатĕр-и?—ыйтат хăйĕн „оперативлă" работникĕсенчен.

Лешсем пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ. Нумай-и, сахал-и, вăхăт иртет, йулашкинчен „оперативлă" сводкă пулса та тăрат.

Мĕн тума вĕренет çын—çавна тăват иккен. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн учотпа статистикă йĕнĕпе ĕçлекен пайĕн çыннисем те калама çук хăнăхса çитнĕ сводкă çырма. Сводка тавраш çырмалли çук пулсан, кичемĕнех туйанат вĕсене. Мĕн те пулин тупса кăлараççĕ вара вĕсем.

Шав тăпрана сухалама май çук пулĕ тесе шутланаччĕ епĕр. Ку йăнăш пулнă мĕн. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн сводки тăрăх, нойабĕрĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен, Атăл ыран ларас тенĕ чух, республикипе 1774 гектар сухаланă. 10 кун хушшинче çак ĕç 0,5 процент ÿснĕ

Сводкă тăрăх Йетĕрнепе Тăвай районĕнче 300-шер гектар таран шан тăпра сухаласа пăрахнă. Йетĕрне районĕнче Сăр шывĕ шăннă хыççăн колхозсем утă каçарса лашасене вăйлатса ĕçлеме те пултарна пулĕ. Тăвай районĕнче тепле майпа ĕçленĕ вара, ăна сводкăра кăтартман.

Çавăн пекех, шăн тăпрана мĕнле системăлă плугсемпе сухалани çинчен те сводкăра кăтартман. Çавах та ăна часах ăнланса илме пулат. Епĕр шухăшланă тăрăх, системă йачĕ—очковтирателства, ĕç ордийĕсен йачĕ—ручкăпа перо çеç пулас.

М. К.

Зеркалнăй карп

Зеркалнăй карп йатлă пулă пĕвесенче кăна питĕ лайăх ĕрчесе ÿсет. Кăçал Чăваш республикинчи пулă хуçалăхĕ çак ăнаçлă пулăна çине тăрсах ĕрчетме тытăнчĕ. Хусанти пула трестĕнчен 20—25 грам тайакан пĕр çулталăкри вĕтĕ пулăсене 18 пин штук, Шупашкарти Садвинтрест совхозĕнчен 3400 штук илсе килнĕ. Кусемсĕр пуçне хăйсен 8 пин штук пулнă. Çак 29.410 штук пулăна Чăваш республикинчи пулă хуçалăхĕ Йетĕрне районне 14.028 штук, Шупашкар районне 2632 штук, Пăрачкав районне 9400 штук, Сĕнтĕрвăрри районне 1.050 штук парса йанă.

Пулă ĕрчетес ĕçпе нумай колхозсем интересленеççĕ. Вĕсем йатарласа пĕвесем тăваççĕ. Акă Канаш районĕнче 8 колхоз пулă ĕрчетме тытăннă. Кармалли йалĕнчи колхоз 163 штук, Семенова йалĕнчи колхоз 20 штук пулă илсе кайнă.

Пулăсем питĕ лайăх ÿсеççĕ. 3—4 уйăх хушшинче пĕр пулă 600—800 грам тайакан пулнă.

Çуркунне, май—июнь уйăхĕсенче, пĕвене йанă пулăсене хăлĕ Пăрачкав районĕнче 18 центнер, Йетĕрне районĕнче 22 центнер тытнă. Ытти пулăсене хĕлле пăр айĕнче тытма хатĕрленеççĕ.

Кунсăр пуçне Пăрачкав районĕ Сар шывĕ çинче лешч йатлă пулăна искуственнăй майпа ĕрчетсе пĕр мĕлйун та 350 штука çитерне.

В. А.

Патăрйел колхоз театрĕ Турханта

Патăрйел колхоз театрĕ Турхана пырса, „Айдар" пиесăна лартса пачĕ. Спектаклĕ курма клуба 300 çын ытла пухăнчĕ. Турхан ĕççыннисем спектаклĕ ырларĕç.

М. Полетайев.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкарти спирт заводне

Йуристконсулт
Счетовод-картотетчик
Бухгалтер

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх. Аслă бухгалтер патне пымалла.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Чăвашсен музыкă училищине

БУХГАЛТЕР

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Адрес: Чувашскайа урам, 1, Музыка училищи. Телефон № 4—10

ДИРЕКЦИ.

Чăвашсен государствă педагогикă институтĕнче заочнă вĕренекен студентсене 1937 çулхи декабер уйăхĕнче çеççисене пухмали

ПЛАН

Декабĕрĕн 14—21-мĕшĕсенче кивĕ наборти историксен 1-мĕш курсĕ пуханат—80 çын.

Декабĕрĕн 21—30-мĕшĕсенче кивĕ наборти математиксен 1-мĕш курсĕ пуханат—80 çын.

Асăрхаттарни: Кивĕ наборти 1-мĕш курссенчи заочниксене консултаци пама тата малалли курссене куçармалли екзаменсем йышăнма çеç пухаççĕ. Кивĕ наборти 1-мĕш курссенчи заочниксен малашне çеççисем пулма, çе тата 2-мĕш курса куçайман заочниксене институтран кăларса пăрахаççĕ.

Институт дирекцийĕ.
Çутĕç Халăх Комиссариачĕ.

2—1

Районсенчи Çутĕç пайĕсен пуçлăхĕсене тата туллимар вăтам шкулсемпе вăтам шкулсен директорĕсене

ПУРНЕ ТЕ

Чăвашсен государствă педагогикă институтĕнче заочнă вĕренекен студентсене çеççисене пухмали Çутĕç Халăх Комиссарĕ çирĕплетнĕ план тăрăх, Чăваш АССР Çутĕç Халăх комиссариачĕн Шкул управленийĕ районсенчи çутĕç пайĕсен пуçлăхĕсене тата шкул директорĕсене заочниксене çав çеççисене 100 процентпех йама хушат. Заочниксене çав çеççисене тухса килме чарса тăракан сăлтавсем пулмала мар. Заочниксем çеççисене килессишĕн районри çутĕç пайĕн пуçлăхĕ тата учител-заочник ĕçлекен шкул директорĕ ответлă пулаççĕ.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Шкул управленин начальникĕ ТРОФИМОВ.

2—1

Шупашкар хулинчи ĕççыннисене асра тытма

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ГОРТОП

(хутмалли вут-шанкă хатĕрлекен организаци)

кăçалхи сезонра хутма Шупашкар хулинчи мĕн пур ĕççыннисенчен

вутă хатĕрлеме заказ йышăнат

Заказ йышăннă чухне расчота Гортоп кантурĕнче тăваççĕ (Максим Горький урамĕ, 23-мĕш номерлĕ çурт).

Вут-шанкине çуна çулĕ пулсан Атăл хĕрринчи складран параççĕ. Çуна çулĕ пулаччен Гортопăн Атăл хĕрринче пăрахăç йăвăçсем сутлăх пур, вĕсем çунтарма та, карта-хура тытма та йурăхлă

3—1

1938 çулшăн Республикăра тухакан хаçат-журналсене кирлĕ таран çырăнса илме

ПОДПИСКĂ ЙЫШĂНАÇÇĔ

1938 çулта Шупашкарта тухакан хаçат-журналсем

Хаçат-журнал йачĕсем	Мĕнле чĕлхепе тухнă	Уйăхра миçе №.	1 уйăха т.	1 уйăха пус	3 уйăха т.	3 уйăха пус	6 уйăха т.	6 уйăха пус	12 уйăха т.	12 уйăха пус
Хаçатсем:										
Чăваш Коммунĕ	чăвашла	25—26	2	50	7	50	15	—	30	—
Красная Чувашия	вырăсла	25—26	2	50	7	50	15	—	30	—
Колхозник йалавĕ	чăвашла	10	—	50	1	50	3	—	6	—
Çамрăк болшевик	"	12	—	60	1	80	3	60	7	20
Пионер сасси	"	5	—	25	—	75	1	50	3	—
Радиопередачăсен программи (Чăваш радиокомитетан)	"	2	—	—	—	60	1	20	2	40
Стахановла хăвăртлăхшăн (Канаш-Шупашкар чукунçул строителстви Управленийĕн хаçачĕ)	вырăсла чăвашла	10	—	50	1	50	3	—	6	—
Журналсем:										
Ленин çулĕпе	чăвашла	1	—	50	1	50	3	—	6	—
Ĕçхĕрарăмĕ	"	1	—	50	1	50	3	—	6	—
Болшевикла колхозшăн	"	1	—	50	1	50	3	—	6	—
Агитатор блокночĕ	"	1	—	—	—	75	1	50	3	—
Сунтал	"	1	1	—	3	—	6	—	12	—
Капкăн (кулăш журналĕ)	"	1	—	40	1	20	2	40	4	80
Хатĕр пул	"	1	—	30	—	90	1	80	3	60
Сборник приказов и распоряжений НКПроса	вырăсла	1	—	—	—	—	—	90	1	80

Пур почталйонсене, пичет саракансене 1938 çулшăн республикăра тухакан хаçат журналсене çырăнса илекенсенчен подпискă йышăнма ыйтатпăр.

Нумай вăхăтлăха çырăнса илни тата подпискă укçине вăхăтра хывни хаçат-журналсене вăхăтра илсе тăма шанăç парат.

Вырăнти республикă учрежденийĕсем подпискă укçине Государствă банкне Сойузпичетĕн 141/230 № текущи счечĕ çине куçараççĕ. Ыттисем (ытти хуласем, районрисем) çак адреспе куçараççĕ: Шупашкар хули, Çыхăну çурчĕ, Сойузпичет кантурĕ.

Сойузпичет.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 896. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.